# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ 1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

25 (9060) № * Эрнекун, 2023 çулхи июнь (çĕртме) уйăхĕн 30-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ


Çитĕнӳ

## Республика конкурсĕнче çĕнтернӗ

Июнĕн 24-мĕшĕнче Правительство çуртĕнче «Çамрăк лидерсен команди» республика конкурсĕн çĕнтерӳçисемпе финалисчĕсене чысланă.

«Çамрăк лидерсен команди» республика конкурсне Чăваш Ен Пуçлăхĕн Олег Николаевăн пуçарăвĕпе тăватă мĕш хут ирттернĕ. Кăçал ăна çамрăксен политикине аталантарассине халалланă.

Кăçалхи конкурса 1079 çын хутшăннă. Претендентсем заочнă тата очнă майпа тĕрĕслев витĕр тухнă, хайсене команда ĕçĕнче тĕрĕсленĕ, проект пуçарăвĕсене хӳтĕленĕ. Кăмăл пуррисем тӳлевсĕр майпа пилĕк программăпа вĕренӳ курсĕ тухма пултарнă.

«Çамрăк лидерсен команди» республика конкурсĕн çĕнтерӳçисенчен пĕри Юнкă вăтам шкулĕн директорĕ Геннадий Любимов пулса тăнă. Геннадий Юрьевича çĕнтерӳпе саламлатпăр, малашне те ăнăçусем сунатпăр.

**Муркаш округ сайтĕнчен.**

## Муркаш райповĕ – малтисен йышĕнче

Раççей Федерацийĕн Центросоюзĕ регионсенчи потребитель кооперацийĕсен союзĕсемпе организацийĕсем хушшинчи «Ĕç-хĕл отраслĕсене эффективлă аталантарассишĕн» пĕтĕм Раççей ăмăртăвĕн 2022 çул пĕтĕмлетĕвне тунă.

Пĕтĕмĕшле ĕç-хĕле аталантарассипе çĕршыври 64 регион потребсоюзĕ хушшинче Атăл çи федераци округĕ тăрăх пĕрремĕш вырăна Чăвашпотребсоюза панă. Чăвашпотребсоюз системинчи Ишлей, Муркаш тата Етĕрне райповĕсем вара «Ĕç-хĕл отраслĕсене эффективлă аталантарассишĕн» пĕтĕм Раççей ăмăртăвĕнче Центросоюзăн 2 пин ытла коопераци организацийĕ хушшинче çĕнтерӳçĕсем пулса тăнă. Муркаш райповĕ пĕтĕмĕшле ĕç-хĕле аталантарассипе пĕрремĕш вырăн çĕнсе илнĕ.

Аса илтересшĕн, ăмăрту пĕтĕмлетĕвне Раççей Федерацийĕн Центросоюзĕн канашĕн президиумĕ çирĕплетет. Регион потребсоюзĕсен ĕç-хĕлĕн рейтинг хаклавне ирттернĕ чухне ĕç-хĕл калăпăшне, ÿсĕм тата финанс кăтартăвĕсене шута илеççĕ.

**Владислав ШАПОШНИКОВ.**

Çырăнтару – 2023

## Августран илсе тăма

**Хаклă вулакансем! Районти «Çĕнтерӳ ялавĕ» хаçата августран тытăнса илсе тăма çырăнма май пур. Çыхăну уйрăмĕсене çитме, почтальонсемпе тĕл пулма тăрăшăр.**

**Малашне те пĕрле пулар. Район хаçачĕсĕр юлар мар.**

**Райхаçат редакцийĕ.**

Республика кунĕпе

## Вут-кăварпа кĕрешме – çĕнĕ КамАЗ




***Пирĕн округăн ÿсĕмĕ кашни ĕç коллективĕ тăрăшуллă ĕçленинчен, хăйĕн отраслĕнче ответлăха туйса вăй хунинчен килнине кашниех ăнланатпăр. Çакна республика шайĕнче те асăрхасах тăраççĕ. Кунта вара пĕрлехи ĕçе упраса хăварасси, экономикăна малалла аталантарасси тĕп вырăна тухать.***

***Çӳлерех каланине шута хурса иртнĕ эрнере Муркашри 37-мĕш номерлĕ пушар чăçне инкек пулнă вырăна вăхăтра çитме, вут-кăварпа ăнăçлă кĕрешме республикăран 6 тонна шыв турттаракан çĕнĕ КамАЗ автомашина пачĕç. Çак ятпа пушар чăçĕнче иртнĕ савăнăçлă мероприятие иртнĕ эрнере Муркаш муниципалитет округĕн ертӳçипе пĕрле Чăваш Республикин представителĕсем те хутшăнчĕç. Пушар чăçĕн пуçлăхне Юрий Варюхина çĕнĕ автоцистерна усçине коллектив умĕнче Чăваш Республикин гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру ĕçĕсен патшалăх комитечĕн председателĕ Сергей Павлов пачĕ (сăн ӳкерчĕкре). Сергей Геннадьевич çĕнĕ техника муркашсене вут-кăварпа кĕрешме пулăшассине палăртрĕ.***

*(Вĕçĕ 5-мĕш стр.)*

Уяв

## Чăвашсен Акатуйне Мускав йышăнать

Июнĕн 19 – 21-мĕшĕсенче Мускавра Раççей Федераци Пухăвĕн Федераци Канашĕнче Чăваш Республикин кунĕсем çӳллĕ шайра иртнĕччĕ. Ыран вара Мускав пĕтĕм чăвашсен Акатуй уявне йышăнать.

Уяв Сокольники паркĕнче иртет. Ăна Чăваш Республикин Правительстви, Мускав хулин наци политикин тата регионсем хушшинчи çыхăнусен департаменчĕ, Чăваш наципе культура автономийĕ пулăшнипе йĕркелеççĕ. Çĕр ĕçĕн Акатуй уявĕ çав кун хăйĕн площадкисенче тĕрлĕ наци, тĕрлĕ тĕне ĕненекен çынсене туслă, мирлĕ тата килĕштерсе пурăнассин тĕпи айĕнче пуху.

Хула çыннисемпе хăнасене илемлĕ уяв программи, нумай парне тата сюрприз кĕтет. Чăвашсен аваллăхран пыракан культурипе, йăли-йĕркипе уявра анлăн паллаштарĕç. Ку тĕлĕшпе ятарлă арт-площадка пулĕ. Интерактивсем Чăваш Енĕн аваллăхне, хальхи пурнăçне тата малашлăхне сăнласа кăтартĕç.

Программăра – Чăваш Ен коллективĕсемпе уйрăм ăстасен пултарулăх концерчĕ те, викторинăсемпе конкурссем те, тĕрлĕ ăмăртусемпе вăйăсем те, спорт мероприятийĕсем те, çĕнтерӳçĕсене чыслассипе-саламласси те. Йăла-йĕрке, ăмăртусен, литература тата ачасен ятарлă уçланкисене йĕркелеççĕ. Уявра коллективсем çавăн пекех Мускав хулинчен те, ытти регионтан та пулаççĕ.

Уява пыракансен чăваш кухнин гастрономи фестивалĕнче наци блюдисене тутанса пăхма май пулĕ. Çавăн пекех тĕп наци йăли-йĕркисен театрализацине, чăваш ташшисен флешмобне, ачасемпе çитĕннисем валли йĕркелекен мастер-классене хутшăнма май туса парĕç.

Пĕр сăмахпа, никама та кичем пулмĕ пĕтĕм чăвашсен Акатуй уявĕнче. Унта пурне те хапăл туса кĕтеççĕ. Уяв 11 сехетре пуçланать.

**Владислав ШАПОШНИКОВ.**

Çĕнĕлĕхсем

## Июльтен мĕн улшăнать?

***Раççейре пурăнакансен хăш-пĕр бюрократи мелсĕрлĕхĕнчен тата проблеминчен хăтăлма май пулать. Инвалид статусне илессин тата çирĕплетессин, пурăнакан вырăнта регистрациленессин процедурисем ансатланаççĕ. Парăмçăсен банк счечĕ çинче пурăнма кирлĕ минимум сыхланса юлма тивĕç. Çак тата ытти çĕнĕлĕхсем пирки тĕплĕнрех.***

**Паспорт илмелли çĕнĕ срок**

Июльтен шалти ĕçсен пайне е МФЦ-на кирлĕ документсем леçсе панă хыççăн пилĕк ĕç кунĕ хушшинче гражданина паспорт пама тивĕç пулаççĕ. Çакă çын ăçта пурăннинчен тата документа мĕн сăлтавпа улăштарнинчен килмест.

**Заявлени – электрон мелпе**

Енчен те гражданинăн пĕр хут паракан пенси тӳлевĕ илме право пур пулсан, вăл заявление социаллă фонд, патшалăх тытăмне кĕмен пенси фончĕ е патшалăх услугисен порталĕ урлă электрон майпа пама пултарать.

Пĕр хут паракан тӳлев илме инвалидноçа кура е тăрантаракана çухатнипе страхланă пенси илсе тăракансен, патшалăх пенсийĕ илсе тăракансен право пур. Пĕр хут паракан тӳлеве çавăн пекех пенси çулне çитнĕ пулин те, страховани стажĕ çитменнипе ватлăха пула пенси илме тытăнайманнисем те тивĕçеççĕ. Енчен те гражданинăн пухăнакан пенси виçи страхланă тата пухăнакан пенсисен суммин 5 процентĕнчен иртмест пулсан та вăл пĕр хут паракан тӳлеве илме пултарать.

**Врач патне – полиссăрах**

Июлĕн 1-мĕшĕнчен поликлиникăна çул тытнă чухне обязательнăй медицина страхованийĕн (ОМС) полисне пĕрле илме кирлех мар. Çын кам пулнине çирĕплетекен документ пулсан çителĕклĕ. Çак улшăну обязательнăй медицина страхованийĕнчи реформăпа çыхăннă. Унăн пĕр пайĕ шăпах хут полисран электрон полис çине куçасси пулса тăрать. Ку цифра полисне декабрĕн 1-мĕшĕнчен ĕçе кĕртеççĕ.

Çынсен малашне страхлакан организацие хăйсен суйламалла мар. ОМС территори фончĕ вĕсем валли страховщика хăй палăртать. Хăйсем валли страхлакан конкретлă организацие суйласа илекенсен кăна заявлени çырмалла пулать.

**Пĕчĕк бизнес валли – ятарлă налук режимĕ**

Пĕчĕк бизнесăн çĕнĕ налук режимĕ предпринимательсен пурнăçне çăмăллатма тивĕç. Ку улшăнусем предпринимательсене тата нумай пулмасть регистрациленĕ пĕчĕк бизнес субъекчĕсене пырса тивеççĕ. Сăнав шучĕпе вĕсем çĕнĕ налук режимĕпе – налук илмелли ансатлатнă автоматизаци системипе усă курма пултараççĕ.

Сăнав 2027 çулхи декабрĕн 31-мĕшĕччен пырать, Мускавра, Мускав тата Калуга облаçĕсенче, çавăн пекех Тутар Республикинче вăйра пулать. Асăннă системăна хутшăнакансем страховани взносĕ тӳлемеççĕ, отчетлăх ĕçĕ те вĕсен чакать.

**Парăмçăн та право пур**

Пурăнма кирлĕ минимума сыхласа хăварма. Çакна федерацин «Об исполнительном производстве» саккунĕнчи тӳрлетӳсемпе çирĕплетнĕ. Парăмçă пурăнма кирлĕ минимума сыхласа хăварма кредит организацине заявлени çырса пама пултарать. Çакă çынсене йывăр тапхăрта пурăнмалăх укçа-тенкĕ сыхласа хăварма май парĕ. Тӳрлетӳсем июлĕн 1-мĕшĕнчен вăйра пулаççĕ.

**(Вĕçĕ 3-мĕш стр.)**

Муркаш округĕн территори пайĕсен ĕçĕ-хĕлĕ

# Мăн Сĕнтĕр территори пайĕ

***Мăн Сĕнтĕр, Атикасси, Мăн Хураçка, Мăн Тутаркас, Туçи Олкаш, Вомпăкасси, Ишмула, Кармăш, Кăмăркасси, Малтикас, Мишер, Лап Олкаш, Çĕн Шоккăн, Токшик, Ойкас, Оркум, Турикасси, Ямолккă, Шупуç ялĕсем***



**Муркаш округĕн территорийĕнчи 19 яла пĕрлештерсе тăракан чи пысăк территори пайĕсенчен пĕрне пиллĕкмĕш çул ĕнтĕ Наталья МАРЕЕВА ертсе пырать. «Наталья Анатольевна тăрăшнипе юлашки çулсенче ял çыннисен пурнăç условийĕсем самай лайăхланнине пурте курса тăратпăр», – çапла каланине кирек хăш ялта та илтме пулать.**

Ăнсăртран мар. Чăннипех те территорире иртнĕ çулсенче çынсене канăç паман чылай ыйтăва ăнăçлă татса пама май çитернĕ. «Юлашки вăхăтра ял çыннисен пурнăç хăтлăхне лайăхлатасси çине республика шайĕнче пысăк тимлĕх уйăрнине пурте куратпăр. Пулăшăвăн тĕрлĕрен программи, проекчĕсем пурнăçа кĕреççĕ. Çавăнпа та хамăр пуçаруллă пулсан, туса панă майсемпе анлăрах усă курма тăрăшсан, кирек епле ыйтăва та татса пама май çитеретпĕрех», – тет ку тĕлĕшпе вырăнти ертӳçĕ.

Акă Мăн Сĕнтĕрте нумаях пулмасть 3,5 гектар лаптăк йышăнакан Çĕнтерӳ 40 çул тултарни ячĕллĕ парка савăнăçлă лару-тăрура уçнă. «Формирование комфортной городской среды» регион проекчĕпе кунта хăтлăх ĕçĕсене икĕ тапхăрпа 20 млн ытла тенкĕлĕх туса ирттернĕ. Асăннă программăпах кăçал паркра ача-пăча вăйă комплексĕ те йĕркелеме май килнĕ. Çав тĕллевпе республика 8 млн тенкĕ уйăрнă.

Республика программи пулăшнипех пĕлтĕр кунти вăтам шкул хăйĕн сăн-сăпатне тĕпрен улăштарнă. Капиталлă юсав ĕçĕсем туса ирттернĕ. Кăçал вара шкул территорийĕнче хăтлăх ĕçĕсене 22 млн тенкĕлĕх туса ирттерме палăртаççĕ.

Ял çыннисен шыв ыйтăвне татса парассипе тĕллевлĕ ĕçлесе пыраççĕ. Чăваш Республикин «Модернизация и развитие сферы жилищно-коммунального хозяйства» патшалăх программин «Модернизация коммунальной инфраструктуры на территории Чувашской Республики» хушма программине хутшăнса территори пайĕнче 2022 çулта харăсах пилĕк объектра юсав ĕçĕсем туса ирттернĕ, шыв уçламалли башньăсен ыйтăвне Шупуçĕнче, Çĕн Шоккăнра, Вомпăкассинче, Мăн Сĕнтĕрте тата Кармăшра татса пама май килнĕ. Татах тепĕр объектра – Туçи Олкашра ку ĕçсене кăçал пурнăçланă.

Республикăра 2017 çултан тытăнса пурнăçа кĕрекен пуçарулăх бюджечĕн программи Мăн Сĕнтĕр территори пайĕнче анлă çул тупнă. Кăçал пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе кунта 5 проект пурнăçа кĕртеççĕ. Ялсенче çапла майпа урам çулĕсене вак чул сарса хытараççĕ, шыв пăрăхĕсене юсаса çĕнетеççĕ, ытти хăтлăх ĕçĕ туса ирттереççĕ. Çак вăхăта Мăн Хураçкари Центральная урамран тытăнса Атикасси ялĕ патне çити тата Мăн Сĕнтĕрти Горький урамĕнче шыв пăрăхĕсене çĕнетнĕ ĕнтĕ. Кунсăр пуçне Мăн Сĕнтĕрти Трудовая урамра, Шупуçĕнчи Огадерская урамра, Мăн Тутаркасри Пакшандаев урамĕнче çулсене вак чул сарма палăртаççĕ. Республика çул-йĕр фондĕнчен укçа уйăрнипе вара çак кунсенче кăна Мăн Хураçка урамĕнче асфальт сарса пĕтернĕ.



**Мăн Сĕнтĕр паркĕ – ял çыннисен юратнă вырăнĕ.**



**Турикасси çулне пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе юсанă.**



**Владимир ИЛЬДУКОВ, Турикасси ялĕн старости:**

– Хам çак ялтан пулин те, унччен хулара ĕçлесе пурăннă. Вунă çул каялла яла пурăнма куçсанах мана ял çыннисем хăйсен старости пулма шанчĕç. Шанăçа тӳрре кăларас пулать. Пикенсех ĕçе кӳлĕнтĕм.

Чăвашсем авалах çапла калани пур. Енчен те кунне пĕр пăта та çапмастăн пулсан, хуçалăх саланать. Ку сăмахсем шăпах ĕнтĕ ял çыннине, ял пурнăçне пырса тивеççĕ. Ялта пурнăçĕ çавăн пек. Куллен тенĕ пекех мĕн те пулин тумалла. Çавăн чухне кăна пирĕн кулленхи пурнăç хăтлăланса пырĕ. Шăпах çак чăнлăха тĕпе хурса пурăнма тăрăшатпăр та эпир хамăр ялта.

Малтанхи вăхăтра ялта урам хушшисене çĕрлехи вăхăтра çутатса тăрасси те йĕркеллĕ пулман, йĕпе-сапа чухне çулĕ те пылчăкпа çăрăнатчĕ, çуллахи вăхăтра кăна мар, хĕл кунĕсенче шывсăр аптăрани те пулнă.

Малтанах ялта шыв проблемине татса парас шухăшлă пултăмăр. Туса парасса кĕтсе май килмест. Çавăнпа та ыйтăва ял çыннисем пуçарулăх бюджечĕн мелĕпе пурнăçлама кăмăл турĕç. Кирлĕ чухлĕ укçи-тенкине те пуçтартăмăр. Çапла вара 2020 çулта ял хушшинче шыв пăрăхĕсем хурса хăвартăмăр.

Тепĕр çулне ялти çула вак чул сарса хытарас терĕмĕр. Шухăшланă – тунă. 800 метр тăршшĕ çула та пуçарулăх бюджечĕн мелĕпех юсаса йĕркене кĕртрĕмĕр. Хамăр укçа пухсах асфальт ванчăкĕ те туянтăмăр, çула çиеле сарса тикĕслерĕмĕр.

Çапла майпа кашни çулах эпир мĕнле те пулин пĕлтерĕшлĕ ыйтăва татса пама тăрăшатпăр. Иртнĕ çул пĕрлехи вăйпа шыв башнине улăштарма пултартăмăр, насусне те çĕннине лартнă. Тинех ялта шыв ыйтăвне пĕтĕмĕшпех татса патăмăр теме пулать.

Халĕ пирĕн ялта çулĕ те, шывĕ те, çути те пур. Çавăнпа та çирĕплетсех калама пулать: хамăр пĕрле пулсан, пĕрле тăрăшсан темĕнле ыйтăва та татса пама пулать. Мĕн туни – хамăр валлиех.



**Мăн Хураçкари шыв башнине иртнĕ çул хута янă.**



**Валентина КОМИССАРОВА, вырăнти активистка, ал ĕç ăстисен кружокĕн ертӳçи:**

– Культурăпа кану центрĕнче икĕ çул ĕçлетĕп. Унччен Каршлăхри вăрçăпа ĕç ветеранĕсен интернат çуртĕнче вăй хунă.

Ятарлă çар операцийĕ пуçлансанах пирĕн тăрăхра пурăнакансем те мобилизаци йĕркипе хăйсен ирĕкĕпе çара кайнисене, контрактниксене пулăшас ĕçе кӳлĕнчĕç. Фронта ăсатма тумтир, çипуç, апат-çимĕç, эмелсем пухассине йĕркелерĕмĕр. Кăçалхи февральтен вара эпир хамăр патра маскировка сечĕсем çыхма тытăнтăмăр. Çак вăхăта ентеш салтаксем валли 53 маскировка сечĕ хатĕрлесе ăсатма ĕлкĕртĕмĕр.

Пулăшу ĕçĕ – пĕрлехи ĕç. Хамăрăн ентешсем алла хĕç-пăшал тытса пирĕн мирлĕ пурнăçшăн çапăçнă чухне эпир епле лăпкă ларма пултаратпăр-ха? Пирĕн салтаксем пуçне çĕклекен фашизмпа çапăçнă çĕрте хăйсем пĕччен пулманнине туйса тăччăр тетпĕр. Сеть çыхнă çĕрте куллен тăрăшакансем Василиса Яргейкина, Анна Егорова, Галина Захарова, Наталья Цветкова, Татьяна Краснова, Татьяна Блинова, Зинаида Сорокина çакна лайăх ăнланаççĕ.

Салтаксем патне ăсатма посылкăсем те хатĕрлетпĕр. Çак пархатарлă ĕçре эпир пĕччен мар. Пулăшу ĕçне Ойкас, Мăн Хураçка ялĕсенче пурăнакансем тата ыттисем активлă хутшăнаççĕ. Хамăр тăрăхри уйрăм предпринимательсем Александр Титов, Виталий Васильев, Мăн Сĕнтĕр райповĕ укçа-тенкĕпе те, материалсемпе те, продуктсемпе те пулăшма тăрăшаççĕ. Валентина Сютесова çипуç енĕпе сахал мар пулăшрĕ. Пурне те вĕсене тав сăмахĕ каласшăн. Пĕрле пулсан эпир çĕнтеретпĕрех.

**Кăларăма Владислав ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**



**Вырăнти «Янаш» юрăпа ташă халăх ансамблĕ хăйĕн пултарулăхĕпе чикĕ леш енче те паллаштарнă. Сăн ӳкерчĕке 2006 çулта Венгрире тунă.**

Çĕнĕлĕхсем

# Июльтен мĕн улшăнать?

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

**ОСАГО компенсацине – портал урлă**

Медицина кăтартăвĕпе транспорт хатĕрĕпе усă куракан инвалидсем тата вĕсен саккунлă представителĕсем ОСАГО хакĕн 50 процентне компенсацилеме заявление патшалăх услугисен порталĕ урлă пама пултараççĕ. Çавăн пекех вилнĕ çар çыннисемпе силовиксен çемье членĕсенчен те социаллă пулăшу мелĕсене тивĕçме заявление çапла майпа йышăнаççĕ. Вăл шутра пурăнмалли çурт-йĕршĕн, капиталлă юсав ĕçĕсемшĕн, ЖКХ услугисемшĕн тата ачасемшĕн паракан тӳлевсене илме.

**Инвалидноç илессин çĕнĕ правилисем**

Инвалидноç илессин çĕнĕ правилисем вăйра пулаççĕ. Çапла вара граждансем комиссие епле майпа тухассине хăйсем суйласа илме пултараççĕ – очнă е заочнă. Мĕнле мел суйласа илесси пирки йышăнăва экспертизăна кайма комисси направленине илнĕ хыççăн тумалла пулать. Экспертиза очнă тухнă чухне гражданин экспертиза вырăнне хăй пырать е комисси вăл пурăннă вырăна каять. Сăмахран, киле, интерната, юсанмалли учреждение е медицина организацине. Заочнă чухне вара экспертиза çынсăр хăйĕнсĕр тăратнă документсене кура ирттереççĕ. Медицина документчĕсене çын тĕрĕслесе тăнă медицина организацийĕ парать.

**Ансатрах майпа регистрацилеççĕ**

Пурăнакан вырăнта регистрациленесси ансатланать. Граждансем июлĕн 1-мĕшĕнчен муниципалитет шайĕнчи кирек хăш регистраци органĕнче те регистрациленме пултараççĕ. Учета илме завление тата регистраци свидетельствине патшалăх услугисен порталĕ урлă электрон мелпе илме пулать.

Патшалăх тата муниципалитет услугисемпе тивĕçтерекен центрсен, ТСЖ представителĕсем, патшалăх услугисен тата регистраци информацине пама тивĕç ытти сотрудниксем гражданинран информаци йышăннă хыççăн пĕр кун хушшинче ăна регистраци учечĕн органне çитерме тивĕç пулаççĕ.

**Парăма туллин кăтартаççĕ**

Июлĕн 3-мĕшĕнчен тытăнса банк клиенчĕсен кредит пирки туллирех информаци илме май пулать. Çакă федераци «О потребительском кредите (займе)» саккунне улшăнусем кĕртнипе çыхăннă. Асăннă улшăнусемпе килĕшӳллĕн малашне банксем хушăнакан процентсене туллин кăтартма тивĕç пулаççĕ. Чи пĕчĕк гарантиллĕ ставкăна вара кредит килĕшĕвĕн пĕрремĕш страницинче кăтартмалла.

Çавăн пекех июлĕн 1-мĕшĕнчен перекет банкĕ урăх банксен, кредит тата микрофинанс организацийĕсен картти çине сайт урлă тата приложенипе усă курса укçа куçарнăшăн 1,25 процент комисси илет, унăн чи пĕчĕк сумми 30 тенкĕ, чи пысăкки – 150 тенкĕ. Анчах та перекет банкĕн клиенчĕсем уйăхне 50 пин тенкĕ таран «Сбербанк Онлайн» приложенипе тӳлевсĕрех куçарма пултарĕç.

**Владислав ШАПОШНИКОВ пухса хатĕрленĕ.**

Июлĕн 3-мĕшĕ – Патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн кунĕ

# Çынсем хăйсене хăрушсăрлăхра туйччăр

**Эпир кашни кун çӳрекен çулсем çинчи йĕркене хальхи вăхăтра никам та нимĕнле майпа та пăхса тăманнине куç умне кăларма та йывăр, мĕншĕн тесен патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекторĕсем çулйĕр çинчи хăрушсăрлăхшăн тимленине пирĕнтен кашниех мĕн ачаранпах курса тăрать.**

**Муркаш муниципалитет округ территорийĕнчи çулсем çинче паян мĕнле лару-тăру хуçаланать? Патшалăх çул-йĕр хăрушсăрлăх инспекцийĕн Муркаш тăрăхĕнчи уйрăмĕн ертӳçипе Александр ЩЕРБАКОВ полици капитанĕпе уяв умĕн шăпах çак ыйту тавра калаçрăм.**

– Паянхи кун пирĕн коллектив çичĕ çынран тăрать. Хамăр тивĕçе яланах тӳрĕ кăмăлпа, хамăр çине хунă ответлăха туйса пурнăçлатпăр.

Хальхи вăхăтра Муркаш муниципалитет тăрăхĕнче хытарса тунă çулсем пурĕ 735 километра яхăн, вĕсенчен вырăнти тата муниципалитет пĕлтерĕшлĕ çулсем 613 км çурă майлă, М-7 федераци трассин 27 км тăршшĕ лаптăкĕ, республика пĕлтерĕшлĕ «Автанкасси – Козьмодемьянск», «Элĕк – Ишек», «Муркаш – Турай – Сăр», «Атăл – Мăн Сĕнтĕр – Мăн Шашкар», «Сăр» çулĕсен уйрăм лаптăкĕсем.

Транспорт хатĕрĕсен шучĕ муниципалитетра 10 пин çурă единица ытла.

Çултапăк пуçланнăранпа паянхи куна **(Авт.: Калаçу июнĕн 28-мĕшĕнче пулса иртрĕ.)** Муркаш муниципалитет округ территорийĕнчи çул-йĕр çинче аварисен пĕтĕмĕшле шучĕ ӳснине палăртатпăр. Пулса иртнĕ 15 аварире 2 çын вилнĕ, 29 çын суранланнă.

Пирĕн уйрăмăн инспекторĕсем тимлĕхре тытса тăракан çулсем çинче 5 авари пулнă, пĕр çын вилнĕ тата 6 çын суранланнă.

Тĕслĕхсене палăртса хăварма пултаратăп. Январь уйăхĕнче «Тойкилтĕ – Кĕртекасси» çул çинче Исетерккĕ ялĕ еннелле пыракан çăмăл машина чарăну павильонĕ çине кĕрсе кайнă. Хĕрарăм водитель руле «итлеттереймен». Ăна Шупашкарти больницăна леçме тивнĕ.

Март уйăхĕнче «Гигант» çулĕ çинче Шупашкартан Мăн Сĕнтĕр енне пыракан çăмăл машина кювета сикнĕ. Сăлтавĕ – водитель ӳсĕр пулнă, хăйĕн транспорт хатĕрĕпе çӳреме ирĕк паракан удостоверени те пулман. Çак аварире пĕр пассажир вилчĕ.

Март уйăхĕнчех «Автанкасси – Муркаш – Козьмодемьянск» çул çинче çăмăл машина хăй умĕнче пыракан транспорт хатĕрĕ çине кĕрсе кайнине пула авари пулса иртрĕ. Пĕр пассажир суранланчĕ.

Апрель уйăхĕнче «Тойкилтĕ – Кĕртекасси» çул çинче пыракан мотоблок кювета çаврăнса ӳкни пулнă. Пассажир суранланнă.

Çав уйăхрах республика пĕлтерĕшлĕ çул çинче тепĕр авари пулчĕ: тĕп çул çине тухнă чухне çăмăл автомашина унта пыракан транспорт хатĕрĕпе çапăннă. Правилăна пăхăнман водитель суранланнă.

Куратпăр, авари сăлтавĕсем тĕрлĕрен пулма пултараççĕ, анчах та пур тĕслĕхре те çын факторĕ пур. Водителĕн яланах çул-йĕр правилисене пăхăнмалла, кирек мĕнле лару-тăрура та тимлĕ пулмалла.

Хамăр территорири аварисене тишкернĕ хыççăн, хальхи вăхăтра инкек час-часах тухакан вырăн «Автанкасси – Муркаш – Козьмодемьянск» çул пулса тăрать. Çулăн Ятман ялĕ, Çатракасси ялĕ, Муркашăн Восточная урамĕ, Пăсăрман ялĕ, Москакасси ялĕ патĕнчен иртекен лаптăксем хăрушлăх кăларса тăракан лаптăксем шутланаççĕ. Çак вырăнсенче водительсем ирĕк панинчен пысăкрах хăвăртлăхпа çӳренине регистрациленĕ факт нумай пулнă. Çак лару-тăру пирки фотофиксаци вырăнĕсене палăртса эпир камерăсем лартма ыйтса «Чувашупрдор» учреждение тухнă. Хальхи вăхăтра унта фото-видеофиксаци приборĕсем ĕçлеççĕ.

Водительсене кăна мар, çуран çӳрекенсене те тимлĕх пирки тăтăшах аса илтеретпĕр, уйрăмах ачасене асăрхаттарса тăмалла. Ачасем хутшăннипе кăçал 2 инкек пулса иртрĕ. Пĕр инкекĕнче икĕ ача суранланчĕ, тепринче – пĕрре. Икĕ аварийĕ те федераци трасси çинче пулнă.

Профилактика ĕçне хальхи вăхăтра эпир çынсемпе тĕл пулса калаçнипе кăна мар, Интернетри тĕрлĕ сетьри страницăсенче асăрхаттару материалĕсем вырнаçтарнипе те туса пыратпăр.

Çул-йĕр çинчи аварисен пĕр пайĕ ӳсĕр водительсене пула пулса иртет. Çултапăк пуçланнăранпа çак сăлтавпа пирĕн тимлĕхри çулсем çинче 3 инкек пулчĕ, вĕсенче пĕр çын вилчĕ, иккĕн суранланчĕç.

Çул çинче ӳсĕр водительсем ан пулччăр тесе тĕрлĕ асăрхаттару мероприятийĕ ирттеретпĕр, йĕркене пăснисене административлă явап тыттарма протокол çыратпăр. Кăçал ку таранччен 38 водителе çак майпа явап тыттарнă.

Тепĕр хут та çул çине машинăпа ӳсĕрле тухнă фактсем тăрăх 3 уголовлă ĕç пуçарнă. Участковăйсем кăçал çулйĕр правилисене пăхăнманшăн 23 административлă ĕç пуçарнă.

Çынсем йĕркене пăсни малалла та пире эффективлă ĕçлеме хистет. Паллах, çакна ăнланса вăй хума тăрăшатпăр, – палăртрĕ калаçура Александр Щербаков.



**Наталия НИКОЛАЕВА.**

**Сăн ӳкерчĕкре: Петр Ильин тата Алексей Филимонов инспекторсем.**

Республика кунĕ

# Муркашсем те активлă хутшăнчĕç



**Муркашсем Республика кунĕнче пĕтĕм чăваш халăхĕпе тата хăнасемпе пĕрле пулчĕç. Хамăрăн пуян йăла-йĕркепе культура мероприятийĕсене кăна мар, Шупашкар экономика форумне те, «Регионы – сотрудничество без границ» курава та, ытти ĕçлĕ мероприятие те хутшăнчĕç.**

**Сăмахран, Муркаш чăх-чĕп фабрики 2022 çулти кăтартупа «Агро-100» клуба кĕме тивĕçнĕ, унта республикăра чи вăйлă аталанса пыракан предприятисен шутĕнче 22-мĕш вырăн йышăннă. Республика кунĕнче регионсем йĕркеленĕ куравра чăх-чĕп фабрикин ĕçĕ-хĕлĕпе паллаштаракан стенд хăй тавра чылай ĕçлĕ çынна та, куравпа паллашма килнĕ ытти çынна та пухнă.**

**Республика кунĕнче чыславсем сахал мар пулчĕç. Республикăри сумлă специалистсен йышĕнче Суворов яч. хис. хуçалăхри Николай Самаков тракторист та пулчĕ. Вăл 10 çула яхăн хуçалăхра трактористра вăй хурать. Уявра пирĕн ентеш Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Тав çырăвне тата алла çыхмалли сехет илме тивĕçрĕ.**

**Культура мероприятийĕсенче Муркашри «Расна» ансамбль пурне те хăйĕн пултарулăхĕпе савăнтарса тĕлĕнтерчĕ. Ярапайкасси тăрăхĕнчи Алена Димитриева вара Республика кунне халалланă «Кĕмĕл сасă» фестивальтен иккĕмĕш степень дипломанчĕ пулса таврăнчĕ.**



**Наталия НИКОЛАЕВА.**

Округра

# Çамрăксен парламентне йĕркелеççĕ

Депутатсен Муркаш муниципалитет округ Пухăвĕнчи çамрăксен парламентне йĕркелес ĕç пуçланнă. Парламент членĕ пулас текенĕн Раççей Федерацийĕн гражданинĕ пулмалла, 16 – 35 çулсенчи çамрăкăн Муркаш муниципалитет округĕн территорийĕнче пурăнмалла.

Кандидатсен конкурс комиссине çак документсене тăратмалла:

– биографи даннăйĕсене кăтартса çырнă анкета (хушамачĕ, ячĕ, ашшĕ ячĕ, çуралнин кунĕ, гражданство пирки тата ăçта пурăннине кăтартни, ăçта ĕçлени, ытти сведени);

– ĕç кĕнекин, обществăлла е ытти ĕç-хĕле çирĕплетекен ытти документ копийĕ;

– вĕреннине çирĕплетекен документ копийĕ, çавăн пекех кандидат кăмăлне кура – квалификаци ÿстернине, класс чинĕ е квалификаци разрячĕ, ученăй степень, ученăй звани илнине, патшалăх наградисене тата хисеплĕ ятсене тивĕçнине çирĕплетекен документсен копийĕ;

– çамрăксен парламенчĕн членĕ пулма килĕшни пирки кандидат çырнă заявлени;

– федераци саккунĕпе килĕшÿллĕн персоналлă даннăйсене пама килĕшни пирки кандидат çырнă ирĕк;

– судпа айăпланни пулни е пулманни пирки панă справка.

Конкурс комиссийĕ документсене ĕç кунĕсенче июлĕн 16-мĕшĕччен 8 сехетрен тытăнса 17 сехетчен йышăнать. Адресĕ: Муркаш ялĕ, Мир урамĕ, 6-мĕш çурт, 206-мĕш пÿлĕм. Çыхăнмалли телефон: 8-952-028-93-38.

Социаллă хÿтлĕх

# Пулăшу – 607 пин тенкĕ

Муниципалитет округĕнче пурăнакан пĕчĕк тупăшлă граждансем хальхи вăхăтра пурăнмалли çурт-йĕршĕн тата коммуналлă услугăсемшĕн тÿлеме патшалăх пулăшăвне тивĕçеççĕ. Вĕсем Чăваш Республикин «Социаллă пулăшу мелĕсемпе тивĕçтерекен центр» хысна учрежденийĕн округри социаллă хÿтлĕх пайĕ урлă субсиди илсе тăраççĕ. Социаллă хÿтлĕх пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, çак вăхăта пĕчĕк тупăшлă çемьесене субсиди 607 пин тенкĕ ытла уйăрса парса пулăшнă.

Граждансене субсидипе вĕсен пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă услугăсемшĕн тÿлеме каякан расхут шайĕ çемьен пĕтĕмĕшле тупăшĕн 22 процентĕнчен иртет пулсан тивĕçтерме пăхнă. Кун пек чухне пурăнмалли çурт-йĕр лаптăкĕн тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă услугăсен хакĕсен регион стандарчĕсене шута илеççĕ.

Çакă пĕлтерĕшлĕ. Субсиди виçине уйăхсерен шутласа палăртаççĕ. Ăна илес текенĕн пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă услугăсемшĕн тÿлессипе юлашки виçĕ çул ытла тапхăрта пухăннă парăм пулмалла мар.

Раççей Федерацийĕн пурăнмалли çурт-йĕр кодексĕпе килĕшÿллĕн, нумай хваттерлĕ çуртра пурăнакан çын капиталлă юсав ĕçĕсем валли тÿлекен взноса та пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă услугăсемшĕн тÿлени шутне кĕртеççĕ.

Субсидипе тивĕçтерме çемьен пĕтĕмĕшле тупăшне палăртнă чухне субсиди илме заявлени панă умĕнхи ултă уйăхри кăтартусене шута илеççĕ.

2023 çул пуçланнăранпа округри 88 çемьене субсидипе тивĕçтернĕ.

**Владислав ШАПОШНИКОВ хатĕрленĕ.**

Пурнăç

# Икĕ чĕре пĕр кĕвĕллĕн тапсан...

Сахал мар пирĕн хушăмăрта хĕрÿ чĕреллĕ, чăваш чунлă хастар çынсем – тăван халăхшăн, çуралнă кĕтесшĕн ырми-канми тимлекенсем. Вĕсен шутĕнче – Çурлатринче пурăнакан, 1939 çулхи мартăн 18-мĕшĕнче çуралнă Алексей Авдеев тата мăшăрĕ Галина Авдеева. Вăл та Çурлатринчех, 1946 çулхи январĕн 3-мĕшĕнче çут тĕнчене килнĕ.

60 çула яхăн пĕр-пĕрипе шăкăл-шăкăл пурăнакан килĕшÿллĕ мăшăр çинчен тĕпленрех каласа парас кăмăл пур.

Совет çарĕнчен службăран таврăнсан яштака та патвар хул-çурăмлă каччă тăван тăрăхрах ĕçлесе пурăнма шутлать. Ача чухнех шофер пулас ĕмĕчĕ малти вырăнта пулнă май, шоферсен курсĕнчен вĕренсе тухать. Çавăнтанпах вăл «Знамя труда» колхозра шферта тимлет, çитĕнÿ хыççăн çитĕнÿ тăвать, нумай наградăна тивĕçет. Çапла тивĕçлĕ канăва тухичченех машина рульне аллинчен ямасть.

Ĕçĕсем ÿсĕм çулĕпех пыни мĕнрен килнĕ-ши тетĕр-и? Хăй пекех ÿркенмен, лара-тăра пĕлмесĕр пăрчăкан пекех пур ĕçе



те тума васкакан чипер пике тупăннăран. Тăван ялтах çуралса ÿснĕ, кунти шкулах чупнă сăпайлă та вашават хĕр Галина Ярикова хавхалану кÿрсе тăнă ăна. Хастар та хĕрÿ чĕреллĕ çамрăксем малашне пĕр-пĕринсĕр пĕр самант та пурăнма пултарайманнине туйса илсен, çемье çавăрма шут тытнă.

1963 çулхи ноябрĕн 19-мĕшĕнче туй кĕрленĕ. Галина Павловна хăйĕн хĕр чухнехи Ярикова хушаматне улăштарса Авдеева пулса тăнă. Çемье династине пуянлатакансем ял хуçалăхĕнчех тăрăшнă, хăйсен ашшĕ-амăшĕн ĕçне малалла тăснă. Галина Павловнăн хăйĕн ĕç стажĕ 40 çулпа танлашать.

Килĕшÿллĕ те юратуллă мăшăр – ĕç ветеранĕсем, пултаруллă çынсем: ĕçре те, ял çинче те хисепре. Йышлă хисеп тата Тав хучĕсем вĕсен тăрăшулăхне, чунĕсемпе ĕçе парăннине çирĕплетеççĕ. Ватлăх çулĕпе хастаррăн утакансем – Çурлатринче пурăнакан Галинăпа Алексей Авдеевсем – хастарлăхне çухатман, ывăлĕн Олегăн тата хĕрĕ Вальăн çемйисене те, мăнукĕсене те тĕрĕс çулпа утма вĕрентеççĕ.

«Хресченĕн çĕр çинче ĕçлемелле. Ял ан пĕттĕр, малаллах аталантăр тесен, кашни çемьен хăйĕн пĕрер ачине тăван тăрăха хăвармалла. Ман шутпа, çак йĕркепе çеç яла сыхласа хăварма май пур», – пĕлтерчĕ Алексей пичче хăйĕн шухăшне.

Кашни çын пурнăçра хăйĕн вырăнне шырать теççĕ. «Знамя труда» колхозра 30 çул ытла водитель пулса малтисен ретĕнче ĕçлесе тивĕçлĕ канăва тухнă Алексей Авдеев çинчен вăл хăйĕн вырăнне тупнă тесе çирĕплетсех калас килет. Вуншар çул пĕр улшăнми юратнă ĕçре вăй хуни шăпах çакна çирĕплетет те.

Тепĕр чухне сăн ÿкерчĕксен альбомĕсене алла илсе уçкаласа пăхса ларма кăмăллать Алексей пичче. Авдеевсен вĕсем темиçе те. Паллан̆ă сăнсем ирĕксĕрех аса илÿ авăрне илсе кĕреççĕ. Ара, вĕсенче иртнĕ кун-çул ÿкерĕнсе юлнă-çке.

Акă, Алексей çамрăк, мал ĕмĕтлĕ каччă. Теприн çинче мăшăрĕпе Гальăпа пĕрле. Виççĕмĕшĕнче пĕрле ĕçленисемпе юнашар тăрать. Шел, хăшĕ-пĕрипе текех алă тытса сывлăх сунма май çук ĕнтĕ, ĕмĕрлĕхех куç хупнă вĕсем. Аса илÿсем, аса илÿсем...

Умра – ватлăх, хыçра – çамрăклăх. Иртние, пĕрле ĕçленĕ юлташĕсене Алексей пичче час-часах аса илет. Пурнăça юратать-ха вăл, анчах ватлăх сывхарса килнишĕн кулянать.

Пурнăç пĕр вырăнта тăмасть. Урапа кустăрми евĕрех малалла шалтăр-шалтăр кусать. Унăн кашни çаврăмĕ кун-çул каçалăкĕпе çыхăннă.

«Ырă ят çĕр сумпа пĕрех. Вăл çĕр çинче выртмасть. Унăн хакĕ, чапĕ пĕтĕмпех çынпа çыхăннă. Манас марчĕ çакна, – тет Алексей пичче час-часах. – Ялти ятлă-сумлă çынсенчен тĕслĕх илесчĕ пирĕн çамрăксен».

Чăнах та, аслисем пирĕншĕн яланах тĕслĕх пулнă. Çавăн пек ентешсене эпĕ час-часах аса илетĕп. Çын çĕр çинче хăнара кăна килет теççĕ. Апла пулин те пурнăçĕнче мĕнпе те пулин палăрса ырă йĕр хăварать.

Ку вăл унăн профессийĕпе е Турă панă пултарулăхĕпе çыхăннă. Çурлатри ялĕнче пурăнакан хисеплĕ те ĕçчен мăшăр çакна чăннипех те çирĕплетет.

Округри ялсенче çемьене ертсе пыракан, харпăр хăй хуçалăхне тытса тăракан, ачасене ÿстерекен тата вĕсене çут çанталăка юратма, ял хуçалăх тата сад-пахча ĕçĕсемпе аппаланма вĕрентекен, çав хушăрах ялти обществăлла пурнăçа та хастар хутшăнакан, кăмăла каякан ĕç валли те вăхăт тупакан хисепе тивĕçлĕ хĕрарăмсем сахал мар. Вĕсенчен пĕри – Çурлатринчи Галина Авдеева.

Галина Павловнăн кăмăлĕ питĕ çирĕп. Унăн тĕллевлĕхĕ, пурнăç ăслăлăхĕ, ĕçченлĕхĕ çывăх çыннисене, ял-йыша тата ĕçтешĕсене чунтан хăпартлантарнă. Çапах чи пĕлтерĕшли – унăн темĕн пысăкăш ырă чĕри. Унăн тараватлăхĕпе чун ăшши пурин валли те çитет: телей саманчĕсенче сирĕнпе савăнать, инкек сиксе тухсан яланах ырă та ăслă сăмахĕсемпе йăпатать.

Ватлăхне пăхмасăр малтан мала ăнтăлакан ĕçчен Алексей пичче паян та аптăрамасть. Кам-ха ăна паян тăхăр теçетке çулпа пыракан тесе калĕ? Яланхи пекех вашават, маттур çÿрет, çирĕп, тăн-тăн тытать хăйне. Оптимист чун-чĕреллĕскер, нихçан та хаш! сывламасть. Унăн ĕмĕчĕ малаллах, тĕллевĕ – кăмăла çĕклекен ĕç тумалла ытларах. Кунта вара пĕччен мар, савнă мăшăрĕ çумра пулни вăй-хăват хушать. Мăшăрпа шанчăклă.

Алексейпа Галина ĕмĕрĕпех хамăрăн тăван «Знамя труда» колхозра тимленĕ. Алексей хуçалăхри чи пирвайхи водительсенчен пĕри пулнă. Галина уй-хир бригадинче вăй хунă. Иккĕшĕ те мĕн пĕчĕкренех колхоз ĕçне пĕтĕм чун хавалĕпе кÿлĕннĕ, нимĕнле ĕçрен те шикленсе хăраса тăман.

«Пурнăçра пирус тĕтĕмне нихăçан та сывласа курман, «йÿççине» пĕлсе сыпнă – сыпăна каймалăх», – пытармасть Алексей пичче. «Пирĕн ывăлпа кĕрÿ, мăнуксем те ĕçмеççĕ-туртмаççĕ», – хушса хурать Галя аппа. Лайăх пулăм. Акă камран тĕслĕх илмелле. Акă мĕнре вăл вăрăм ĕмĕрĕн сăлтавĕ.

«Вăрăм ĕмĕр вăрттăнлăхĕ – хусканура. Сывлăх – чи пысăк пуянлăх. Хусканусем туни нумай эмеле саплаштарать. Вăрăм ĕмĕрлĕ пулас тесен, тĕрлĕ хускану туса кĕлеткене çирĕплетнипе çеç лăпланса лармалла мар, хаçат-журнал, кĕнекесем вуласа астăвăма çирĕплетмелле. Кашни кунах ĕçлемелле. Пурнăçа юратмалла. Никам çине те усал «хăвалса» çÿремелле мар. Кăмăлсăрлăх тĕслĕхĕсем çинчен манма тăрăшмалла, малашлăха шанчăкпа тата ĕненÿпе пăхмалла», – терĕ вăрăм ĕмĕр вăрттăнлăхĕ пирки ыйтсан Алексей пичче.

Вăрçă ачисем йывăр вăхăтра çитĕннĕ пулсан та, тулли вăй-халпа, хавас кăмăл-туйăмпа пурăнма май çитернĕ. Ачалăх мĕнле лайăххăн пĕлме те тÿр килмен вĕсене. Апла пулин те вĕсем тĕрлĕ пăрăнăçран чыслăн тухса пурнăçа йĕркелесе пынă, йывăр ĕçре пиçĕхсе кăмăлĕсене çирĕплетнĕ.

Паянхи куна хисеплĕ мăшăр тивĕçлĕ канура. Çапах та ĕçсĕр ларма хăнăхман вĕсем, килти кулленхи ĕçсенчен те пăрăнмаççĕ ĕç ветеранĕсем. Вĕсен пилĕк мăнук. Вĕсене те тĕрĕс воспитани парассишĕн ырми-канми тăрăшаççĕ.

Нумаях пулмасть эпĕ Георгий Орловăн «Вутри юрату» романне вуласа тухрăм. Малалла илсе кăтартнă йĕркесем шăп та лăп Авдеевсен çемйине аса илтереççĕ: «Пĕрне-пĕри хисеплесен, чунтан юратсан, кирек ăçта та, кирек хăш вăхăтра та пĕри тепришĕн, тепри пĕришĕн тăрать: вĕсем çирĕп чăмăра пĕрлешсе пĕр вăй пулса хăрушлăхран пĕрле хÿтĕленеççĕ, йывăрлăхсене хирĕç пĕрле кĕрешеççĕ, савăнăça та çурмалла пĕрле пайлаççĕ. Çавăн пек тума, телейлĕ пулма чун, тĕллев пĕрлĕхĕ, кăмăл-туйăм çывăхлăхĕ кирлĕ». Чăн-чăн çемьере çапла пулмалла та ĕнтĕ.

Алексей Авдеев хăйĕн тертлĕ пурнăçĕнче хура-шурне сахал мар курнă, Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнчи тата хыççăнхи çулсенчи çити-çитми пурнăça чăтнă.

«Ачалăхăм вăрçă тапхăрне лекрĕ. Çипуç та, урана тăхăнмалли те пулман. Сталин вăхăтĕнче темĕнле нуша та куртăмăр. Кашни хуçалăхран çăмарта, çу, махорка, çăм, çĕр улми, çийĕнчен 800 тенкĕ укçан налук памаллаччĕ. Анне парăмсене мĕнле татмалли çинчен шухăшласа пĕрмай кулянса йĕретчĕ. Эпир выçăллă-тутăллă ĕçленĕ колхозра. Пĕчĕккĕллех – шкула кайиччен – сумка çакса хирте пучах пухнă. Пĕртак ÿссен арçынсем тăвакан ĕçсене те пурнăçлама тытăннă. Ялта вăйпитти арçынсем сахал пулнă», – аса илчĕ Алексей пичче.

Çулсем хушăнса пынă май, ыйхăсăр каçсем нумайланса пыраççĕ. Тем пек çывăрас тесен те, куçа хупса выртсан та, «тăмани» килмест. Çавăн пек чухне утса тухнă кун-çулти самантсем кинофильмри кадрсем пек пĕрин хыççăн тепри курăнаççĕ. Çурлатринчи А. Авдеевăн вара аса илмелли темĕн чухлех. Хăш-пĕр самантсем куççуль кăлараççĕ, теприсем савăнăç туйăмĕ парнелеççĕ. Пурнăç кустăрми пĕр йĕрпе çеç кусман çав.

Çĕр çинчи пурнăça тирпейлĕн тытса пырасси никамшăн та çăмăл мар. Кăçал 84 çул тултарнă Алексей Авдеев, шăпа хăйне пуçран шăлман пулин те, Турă мĕн панипе çырлахнине пĕлтерчĕ. «Турă çырнинчен иртеймĕн», – терĕ вăл.

Авдеевсен çемйи паян тулăх пурнăçпа, ырă кăмăл-шухăшпа, кашни кунпа кăмăлтан киленсе пурăнать. Çапла пулма вĕсене чи малтанах çемьере ватă çынсем хисепре пулни, çамрăксем аслисене итлени çул уçса парать. Хура-шурпа йывăрлăхне сахал мар курнă ватăсем пурнăç хакне лайăх пĕлеççĕ, кашни çĕнĕ куншăн чĕререн савăнаççĕ. Вĕсен кил-çуртĕ таса, тирпейлĕ. Ачисемпе савăнса пурăнаççĕ. Ватлăхра тĕрек пурришĕн хĕпĕртеççĕ.

«Пурнăçра икĕ чĕре пĕр кĕвĕллĕн тапсан, пурнăç çулĕпе утма мĕн тери ырă та хаваслă, савăнăçлă та кăмăллă, ума лартнă тĕллевсем хăйне май пурнăçланса пыраççĕ», – тесе мăнаçланса пĕлтерчĕ хисепе тивĕçнĕ юратуллă мăшăр – Галинăпа Алексей Авдеевсем.

**Геннадий МОИСЕЕВ,**
**Раççей журналистсен союзĕн членĕ.**
**Çемье архивĕнчи сăн ÿкерчĕкре: Авдеевсен çемйи.**

Республика кунĕпе

# Вут-кăварпа кĕрешме – çĕнĕ КамАЗ

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.)

Юлашки çулсенче Муркашри 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕ çĕнĕ техникăпа пуянлансах пырать. Çакă ирĕке кайнă вут-çулăмпа кĕрешес ĕçе вăйлатать, çухату хисепне чакарать, ырă малашлăха шанса пурăнма хавхалантарать, çĕнĕ тĕллевсем çуратать. Ку вăл округра пурăнакансен лăпкăлăхĕпе çыхăннă.

– «Хĕрлĕ автанпа» кĕрешессине Муркашри 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕпе округ территорийĕнчи уйрăм постсемпе ирĕклĕ пушар хуралĕсем, ведомствăллă пушар хурал ĕçченĕсем тĕплĕ пурнăçланине палăртатăп. Кунпа пĕрлех вĕсем малашлăха пăхса профилактика ĕçне те тивĕçлĕ шайра туса пыраççĕ. Çакна ырламалла кăна. Вырăнсенче тăрăшнине кура Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Олег Николаев та халăха хăрушсăрлăхпа тивĕçтерес, уйрăм территорисенче чрезвычайлă лару-тăру сиксе тухасран асăрханас ыйтусем çине пысăк тимлĕх уйăрать. Çакă пушарпа кĕрешекен подразделенисен пурлăхпа техника базине тĕреклетме çулсерен укçа-тенкĕ ытларах уйăрнинчен те курăнать. 2023 çулта ЧР Финанс министерстви «Повышение безопастности жизнедеятельности населения и территорий Чувашской Республики» патшалăх программипе килĕшӳллĕн республика бюджетĕнчен хамăр тăрăхри пушар тата çăлав подразделенийĕсен пурлăхпа техника базине тĕреклетме пĕтĕмпе 54 миллион тенкĕ уйăрнă. Вăл шутран 33 миллион тенки – пушар хуралĕ валли автоцистернăсем туянма, – терĕ хăйĕн сăмахĕнче ЧР гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру ыйтăвĕсемпе ĕçлекен патшалăх комитечĕн председателĕ. Сергей Павлов муркашсем асăннă техникăпа перекетлĕ усă курасса шаннине те пĕлтерчĕ.

Республика кунĕ умĕн 37-мĕш номерлĕ пушар чаçне çакăн пек пысăк парне панине Муркаш муниципалитет округĕн пуçлăхĕ Алексей Матросов пысăк хак пачĕ. «Унченхи 6 тонна шыв турттаракан КамАЗпа 8 тонна шыв илсе вут-çулăмпа кĕрешме тухакан Урал автомашина çумне çăлавçăсем валли кирлĕ аппаратсемпе пуянлатнă çĕнĕ йышши КамАЗ автомашина хушăнни пушарнăйсем малашне «хĕрлĕ автанпа» кĕрешнисĕр пуçне профилактика ĕçне те вăйлатасса шантарать», – терĕ Алексей Николаевич пушар хуралĕнче талăкĕпе çăмăл мар службăра тăракансене ăнăçу сунса.

– Ирĕке кайнă вут-çулăмпа кĕрешесси çăмăл ĕç мар. Пĕрле ĕçлесен çеç пушарсен профилактикин системине аталантарма, «хĕрлĕ автанпа» кĕрешес ĕçре çĕнĕ технологисене алла илме, пурлăха тата çынсен пурнăçĕпе сывлăхне тивĕçлĕ шайра сыхлама, вăхăтра çăлав ĕçĕсем пурнăçлама май парать, – терĕ хăйĕн сăмахĕнче «Чăваш Республикин пушарпа кĕрешес служба» хысна учрежденийĕн ертӳçи Герман Михайлов.




**Сăн ӳкерчĕкре: Г. Михайловпа С. Павлов тата А. Матросов (варринче сулахайран сылтăмалла) 37-мĕш номерлĕ пушар чаçĕн ĕçченĕсемпе çĕнĕ автомашина умĕнче.**

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Надежда СУВОРОВА сăн ӳкерчĕкĕ.**

Республика смотр-конкурсĕ

# Выльăх тухтăрĕсем – Муркашра



Патшалăх ветеринари служби пуçарнипе республикăра виççĕмĕш хут «Чи лайăх ветврач-эпизоотолог» смотр-конкурс иртрĕ. Унта хутшăнакансем кăçал Муркашри выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцие çĕртме уйăхĕн 23-мĕшĕнче пухăнчĕç.

Округри выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станци ертӳçи Олег Воробьев пухăннисене хăйсен ĕçĕпе, округ пурнăçĕпе, умри тĕллевсемпе паллаштарчĕ.

– Выльăх тухтăрĕ чĕр чунсен сывлăхĕшĕн çеç мар, этем пуласлăхĕшĕн те яваплă пулнине кашниех ăнланатпăр. Çавăнпа смотр-конкурса хутшăнма кăмăл тунисене ăнăçу сунатăп. Муркашсене вара пире лайăх кĕтсе илнĕшĕн, хăйсен территорине тирпейлĕ те хăтлă тытнăшăн тав тăватăп, – терĕ смотр-конкурса уçса сăмах каланă май Чăваш Республикин патшалăх ветеринари службин ертӳçин çумĕ Николай Харитонов.

Смотр-конкурса хутшăннă выльăх тухтăрĕсем теори пайĕнче эпизоотологи ыйтăвĕсене хуравларĕç. Практика пайĕнче вара вĕсем билет туртса чăх-чĕп грипĕ тĕлĕшпе юн илсе анализа ăсатассипе, чирĕн малтанхи паллисене пĕлнипе, чир хăрушлăхĕ пулсан малтанхи ĕçсене пурнăçлассипе, чирпе çийĕнчех кĕрешме пуçлассипе, ун тĕлĕшпе документсем çырассипе хăйсен пĕлĕвне тĕрĕслерĕç.

– Смотр-конкурс ăнăçлă иртни, выльăх тухтăрĕсем хăйсене лайăх енчен кăтартни Чăваш Республикин патшалăх ветеринари службин тĕллевлĕ ĕçлесе пынине çирĕплетет, – терĕ Чăваш патшалăх аграри университечĕн кафедра пуçлăхĕ Владимир Тихонов.

Смотр-конкурсра пирĕн округ ятне Шурчари ветучасток заведующийĕ Татьяна Львова хӳтĕлерĕ. Муркашра иртнĕ ăмăртăва жюри членĕсем выльăх тухтăрĕн кунĕ тĕлне (çурла уйăхĕн 31-мĕшĕ) пĕтĕмлетессине пĕлтерчĕç.

**Сăн ӳкерчĕкре: конкурса хутшăннисем жюри членĕсемпе пĕрле.**

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Автор сăн ӳкерчĕкĕ.**

Специалистпа калаçатпăр

# Чĕр чун тытас йĕркери улшăнусем

***Ялта пурăнакансен килти хушма хуçалăхĕнче выльăх-чĕрлĕх тата чăх-чĕп паян сахал мар. Кунта çынсем килте усрама тăрăшакан ытти чĕр чун пирки те манмалли çук. Анчах малашлăха пăхса пурăнакан граждансен кулленхи пурнăçра Раççей Федерацийĕн «Ветеринари çинчен» саккунĕнче палăртнă йĕркене пăхăнасси пирки самантлăха та манма юрамасть. Кăçалхи çĕртме уйăхĕн 15-мĕшĕнче Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн 414-мĕш номерлĕ йышăнăвĕпе килти хушма хуçалăхра чĕр чунсем тытма хушма çирĕплетӳсем тунă. Кунпа пĕрлех вăл килти чĕр чуна çиччĕ виççе пăхмасăр халăх тăтăш çӳрекен вырăнсене, урăх-çарана, кану вырăнĕсене кăларассипе те малашне тимлĕрех пулма ыйтать. Çĕнĕлĕхсемпе паллаштарма паян эпир хамăр тĕпеле районти выльăх чирĕсемпе кĕрешекен станцин выльăх тухтăрне Татьяна КИСЕЛЕВĂНА чĕнтĕмĕр.***

**– Татьяна Витальевна, ку йышăну çинче тĕплĕнрех чарăнса тăмăр-ши? Ăна пурнăçа кĕртес тесен ял çыннин мĕн çине ытларах тимлĕх уйăрмалла пулса тухать?**

– Тулли хурав пама эпĕ хирĕç мар. Тĕрĕссипе ку ыйту паян çеç кун йĕркине тухман. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕнче, тĕпрен илсен, килти чĕр чунсене хушма хуçалăхра тытассипе тата вĕсене усăлтарса çӳрессипе хушма правилăсем çирĕплетнĕ. Çапла вара вĕсемпе килĕшӳллĕн «Об ответственном обращении с животными и о внесении изменений в отдельные законодательные акты Российской Федерации» федераци саккунĕпе пăхса хăварнă йĕркене çĕнĕ чарусем кĕртнĕ çеç. Уйрăммăн илсен:

– гражданинăн килти чĕр чуна малашне пурте усă куракан территорисенче усăлтарса çӳретме те, çав шутра ăна апатлантарма та юрамасть;

– килти чĕр чуна пурте усă куракан территорисенче никам пăхмасăр хăварасран кашнин асăрханмалла;

– хушма хуçалăх хуçисене хăйсен харпăрлăхĕнче тытакан килти чĕр чунсене хăйсен ирĕкĕпе çӳретме карта тытса панă вырăнсăр пуçне ытти çĕре ирĕккĕн кăларма чарнă. Килте йытă пур пулсан, хуçалăха кĕмелли алăк çинче çакăн пирки пĕлтерни пулмалла;

– йытăсене малашне пурте усă куракан территорисене туталăхсăр (намордник) тата сăнчăрсăр илсе тухма пачах юрамасть. Çав вăхăтрах виçĕ уйăха çитмен çурăсемпе 30 см çӳллĕш йытăсем валли туталăх пулмасан та юрать;

– килти чĕр чунсене суту-илӳ, общественла апатлану, медицина, вĕренӳ, социаллă пулăшу объекчĕсемпе организацийĕсене, йытă-проводниксемпе çӳренисĕр пуçне, малашне пачах кĕртмелле мар.

Маларах каланă йышăнăва пурнăçа кĕртес тĕллевпе ветеринари ыйтăвĕсемпе ĕçлекен патшалăх учрежденийĕсем килти чĕр чунсене (йытăсемпе кушаксене) регистрацилес услугăсене тӳлевсĕр пурнăçлаççĕ. Вĕсем чĕр чунсен хуçисене çирĕплетнĕ формăпа тата кăтартусене «Все звери» кăтартусен базине кĕртнине çирĕплетсе регистраци документне параççĕ.

Килти харпăрлăхри чĕр чунсене регистрацилес ĕçе вĕсен хуçисен йышăну туллин ĕçлеме пуçличчен – 2024 çулхи пуш уйăхĕн 1-мĕшĕччен – туса ирттерме тăрăшмаллине тепĕр хут аса илтеретĕп.

**– Хушма чарусем ăнлава халăха ăнланмаллăрах каласа пама май çук-ши?**

– Çĕнĕлĕхре çакăн пек тĕп ăнлавсем тĕл пулаççĕ. Пĕрле усă куракан территорисемпе вырăнсен шутне – çынсен пысăк ушкăнĕ усă куракан пӳрт-çуртсемпе пӳлĕмсен уйрăм пайĕсем, подъездсемпе хваттер умĕнчи лаптăксем, урамсем, юханшыв çыранĕсенчи çулсем, скверсемпе бульварсем кĕреççĕ.

Чĕр чунсене регистрацилесси пирки те уйрăммăн каласа хăваратăп. Йытă-кушака туяннă хыççăн 15 талăкра, çуралнă хыççăн 3 уйăх çитсен вĕсен хуçисен вырăнти патшалăх ветеринари учрежденийĕнче обязательнăй йĕркепе регистрацилемелле. Регистраци удостоверенине çухатсан дубликата патшалăх учрежденийĕ чĕр чун хуçи ыйтнă кунах туса парать, ун çине «Дубликат» паллă лартать.

Харпăрлăхри чĕр чуна вăхăтра патшалăх ветеринари учрежденийĕнче регистрацилени чухне вĕсене идентификацилесси хуçисен ирĕкĕпе пулса пымаллине уйрăммăн палăртатăп. Маларах асăннă йĕркесем йăлтах пирĕн тăрăха общественла секторти тата килти выльăхшăн, граждансем харпăрлăхра тытакан чĕр чуншăн тата çынсемшĕн хăрушă чир-чĕр килсе кĕресрен упранассипе, экономика аталанăвне сыхлассипе çыхăннă.

Граждансем килти хушма хуçалăхра выльăх-чĕрлĕхпе пĕрле ытти чĕр чуна усрас йĕркене çирĕп пăхăнсан, вĕсен сывлăхĕ те, килти хушма хуçалăхри продукци пахалăхĕ те, тупăш илесси те кил хуçишĕн иккĕленӳ çуратмĕ тесе вĕçлетĕп хамăн калаçăва. Килте чĕр чун тытакансем çеç маларах каланине тĕрĕс ăнланса йĕркене ан пăсчăр.

**– Тавах пирĕн вулакансене çĕнĕлĕхсемпе çывăх паллаштарнăшăн.**

**Анатолий БЕЛОВ калаçнă.**

Çар комиссариатĕнче

# Çара – контракт килĕшĕвĕ çырса




Хальхи вăхăтра контракт çырса çара каяс текенсем самаях нумайланчĕç – Тăван çĕршыва хӳтĕлевçи пулас текенсем 18 çултанах контракт çыраççĕ.

Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссариатне те ку ыйтупа килсе çӳрекен сахал мар. Контрактпа çара каяс текенсемпе кунта Сергей Аксяндаров (çар службине контракт мелĕпе каякансен Шупашкар хулинчи суйлав пунктĕн инструкторĕ) ĕçлет, хăй ирĕкĕпе çара каяс текенсене пĕтĕмпех тĕплĕ ăнлантарса парать.

– Пирĕн пата граждансен чи малтанах хăйсен документĕсене илсе килмелле: паспорт, çар билечĕ, вĕренни çинчен, çемье çинчен калакан документсем, СНИЛС, ИНН тата ытти те. Автобиографи те çырмалла пулать. Çар комиссариатĕнче çак документсене тишкеретпĕр, кандидатпа калаçатпăр. Хыççăн вара çар врач комиссине кайма направлени паратпăр. Çын çара кайма юрăхлă пулсан унăн документĕсене кирлĕ пек хатĕрлесе паратпăр та контракт çырма çар часĕне каймалли кăна юлать. Контракта çар часĕнче çыраççĕ, – ăнлантарса парĕ Сергей Аксяндаров.

Çара контракт çырса службăна каяс текенсем çирĕп те çĕкленӳллĕ кăмăллă пулнине, Тăван çĕршыва хӳтлеме хатĕррине палăртаççĕ çар комиссариатĕнче. Патшалăх вара контрактпа службăра тăракансене те, вĕсен çемье членĕсене те социаллă гарантисемпе тата çăмăллăхсемпе тивĕçтерет. Вăл шутра: контрактпа службăра тăракансен Раççей Оборона министерствин шучĕпе ятарлă ипотека урлă хваттер хăвартрах туянма май пурри, хĕрӳ вырăнсенче пулнă çар ветеранĕн статусне тивĕçни, пурнăçпа сывлăха федераци бюджечĕн шучĕпе страхлани, çар медицина учрежденийĕсенче тӳлевсĕр тĕрĕсленме, сипленме тата реабилитаци иртерме май пурри, вĕсен ачисене бюджет вырăнне вĕренме кĕме уйрăм условисем туса пани, çуллахи вăхăтра ачисене лагерьсенче тӳлевсĕр канма май туса пани тата ытти те.

Контракт килĕшĕвне е 1, е тӳрех 3 е 5 çуллăх çырма май пур. Килĕшӳ тунă хыççăнах пĕр хутчен паракан тӳлевпе тивĕçтереççĕ. Федераци шайĕнчи тӳлев 195 пин тенкĕпе танлашать. Кунсăр пуçне регион та тӳрех пĕр хутчен тӳлевпе тивĕçтерет. Служба ятарлă çар операцийĕ пынă вырăнта иртнĕ чухне уйăхсерен 204 пин тенкĕрен пуçланакан тӳлевпе тивĕçтереççĕ. Ытти вăхăтра ĕç укçи тӳлесе тăраççĕ.

– Контракт çыракан çыннăн 18 – 60 çулсенче пулмалла. Хăш-пĕр тĕслĕхре, çар учет специальноçне кура, аслăраххисене те – 65 çулчен йышăнаççĕ. Палăртса каласшăн, саккунпа килĕшӳллĕн призывниксем те тӳрех контракт çырма пултараççĕ, – пĕлтерчĕ Сергей Аксяндаров.

Вăл хальхи вăхăтра çар операцийĕнче, сăмахран, водительсем, врачсем, медицина тытăмĕнчи ытти ĕçчен çитменнине каларĕ. Вĕсемпе те контракт килĕшĕвĕсем тăваççĕ.

**Ыйтусем пулсан кирек хăш вăхăтра та Муркаш тата Элĕк районĕсен çар комиссариатне 8(83541)62-3-50, 8(8352)45-20-97 номерсемпе шăнкăравласа ыйтса пĕлме пулать.**

**Наталия НИКОЛАЕВА.**

«Раççей почти»

# Посылкăсене тӳлевсĕрех яма пулать




Ятарлă çар операцине хутшăнакан çар çыннисем патне 10 килограмран çăмăлрах посылкăсене кăçалхи май уйăхĕнченпе тӳлевсĕр ăсатма пулать. Çакăн пирки калакан хушăва «Почта России» пĕрлешĕвĕн генеральнăй директорĕ кăларнăччĕ.

Раççей Федерацийĕн вице-премьерĕ Дмитрий Чернышенко çынсене çак майпа усă курма сĕннĕ. «Çар çыннисем патне почта урлă посылкăсем яма сĕнетĕп. Çак пулăшу та вĕсемшĕн пысăк пĕлтерĕшлĕ пулĕ», – тенĕ вице-премьер. Вăл хушăва çĕршывăн пур почта уйрăмĕсене те çитерние палăртнă, çав шутра – Херсон, Запорожье облаçĕсене те, Донецк тата Луганск халăх Республикисене те, Крыма та.

«Почта России» информацийĕ тăрăх, 10 килограмран çăмăлрах посылкăсене пĕр çын темиçе те яма пултарать. Тĕплĕнрех «Почта России» контакт-центрне 8-800-100-00-00 номерпе шăнкăравласа ыйтса пĕлме май пур», – палăртнă правительство ертӳçин çумĕн аппарачĕ.

**«Почта России» хăйĕн телеграм-каналĕнче çырнă тăрăх, тӳлевсĕр посылкăсене почта уйрăмĕсенче кăна йышăнаççĕ, вĕсене оператор патне усă курупкапа илсе каймалла. Посылка çине çар çыннин хушамачĕпе ятне тата ашшĕ ятне, унăн çар часĕн номерне çырмалла, 103400 индекспа г. Москва – 400 тени вара пуриншĕн те пĕр пек.**

**Пур посылкăна та Мускаври логистика центрне çитереççĕ, унтан – Оборона министерствин представителĕсем патне. Вĕсем вара посылкăна адресат патне çитерме тивĕç.**

**Наталия НИКОЛАЕВА.**

Ятарлă çар операцийĕ

# Пирĕн салтаксем пĕрлĕхре вăй пулнине туйса тăччăр

Муркаш округĕнче пурăнакансем çар операцине хутшăнакан ентешсене пулăшассипе малалла тимлеççĕ.

Çак тĕллевпе февраль уйăхĕнче Телеграм мессенджерта ятарлă чат та туса хутăмăр. Унта хальлĕхе 1 пин ытла çын кăна-ха, анчах муркашсем унта йышланса пырасса шанатпăр, мĕншĕн тесен ентешсене пĕрле пулса пулăшма çăмăлрах тата хăвăртрах май пур.

Кунпа пĕрлех округри лавккасенче «корзина для бойца» тесе çырнă курупкасене те ял халăхĕ май пур таран тултарса пырать: нумай упранакан апат-çимĕç продукчĕсем, гигиена хатĕрĕсем, тумтир тата ыттине те туянса хурать.

Ял çыннисем тата асăннă чатри çынсем тăрăшнипе, вĕсем май пур таран çак ырă ĕçе хутшăннипе февральтенпе тăватă хутчен тĕрлĕ хатĕр туянса салтаксем патне ăсатрăмăр. Хăш-пĕр тиеве ятарласа Муркашран çула тухса çитерсе пама май пулчĕ. Çак ĕçе пурнăçлама, вăрăм çула кайса килме чатри çынсем укçа парса пулăшрĕç. Çапла икĕ хут çул çинчи расхутсем валли 50 тата 55-шер пин тенкĕ уйăрма май пулчĕ. Ентешсем патне Çатракасси территори пайĕн ертӳçи Надежда Никитина тепĕр водительпе пĕрле кайса килчĕ. Расхут пысăккине тата салтаксем отпуска килнине кура хăшпĕр посылкăна отпуска килнĕ салтаксенчен парса ятăмăр, ку ĕç халĕ те çаплах йĕркеленсе пырать.

Малти ретре çапăçакан салтаксем патне вара посылкăсене «ЗОВ Чувашии» ыр кăмăллăх фончĕ урлă ăсатрăмăр. Çак ыр кăмăллăх фончĕн водителĕсем ку таранччен вунсакăр хутчен ятарлă çар операцине çитсе килчĕç ĕнтĕ. Рейссене черет майĕпе йĕркелеççĕ: пĕрре мобилизациленисем патне, фронт линийĕнчен катарах тăракансем патне çитме тăрăшаççĕ, тепринче – малти ретре çапăçакансем патне.

Мобилизаципе çара кайнисемпе (отпуска килнисемпе) тĕл пулса калаçма май тупатпăр. Вĕсем каланă тăрăх, ытларахăшĕ паянхи куна малти ретре мар. Ку кăштах лăпкăлăх кӳрет паллах, анчах Турри пурне те сыхлатăр.

Малти ретре çапăçакан муркашсем май уйăхĕнче пирĕн активлă ушкăнпа çыхăнăва тухса пулăшу кирлине пĕлтерчĕç. Вĕсем ыйтнипе çыхăну валли, çар техникине юсама кирлĕ хатĕрсемпе инструментсем, расхут материалĕсем, яланах кирлĕ гигиена хатĕрĕсем тата ытти япала туянтăмăр.

Пĕр калаçу асран тухмасть. «Паян пилĕк хутчен чей ĕçме тăтăмăр, пиллĕкĕшĕнче те пулмарĕ. Вĕретме тесе лартатпăр кăна – оруди патне чупатпăр – пемелле, килетпĕр те тепре лартатпăр – каллех çапла... Шыв ĕçкелерĕмĕр вара кунĕпе. Кунĕпех ĕçлерĕмĕр, тепĕр тесен кашни кунĕ çапларах. Кайран лешсен енчен шăпланса кăна каçалапа чейне те ĕçрĕмĕр, апатне те çирĕмĕр вара... Веçех йĕркеллех...».

Çак калаçу ентешсемпе пĕр хулана тытса илнĕ чухнехи питĕ хĕрӳ çапăçусем хыççăн пулса иртнĕччĕ. Апла пулин те муркашсем пуç усмаççĕ, шӳтлесе те илеççĕ, хăйсене пĕчĕк пулăшу панăшăн Муркаш тăрăхĕнчи халăха тав сăмахĕ калаççĕ.

Çавăнпа ĕнтĕ малти ретрисен пĕçерме вăхăчĕ çуккине кура хăвăрт апатланма май паракан продуктсем те туянса ярса паратпăр: вермишель, нимĕр, яшка, хăвăрт чей тата газировка тумалли порошоксем. Паллах, шăккалат е канфет та хуратпăр курупкасене. Иртнинче акă Чуманкасси вăтам шкулĕнче вĕренекен ачасемпе учительсем шăккалат туянса пулăшрĕç. Вĕсем ăна ахаль укçа пухса мар, ĕçлесе илнĕ укçапа туяннă – макулатура пухса панă. Çырусем те çырнăччĕ. Тĕрĕс воспитани параççĕ ачасене учительсем, хăйсем вара салтаксем валли укçа куçарса та пулăшаççĕ.

Кăшт маларах хамăрăн салтаксем валлипех «Нива» автомашина та туянса ăсатма пултартăмăр. Ку ĕçре пире депутатсен Муркаш муниципалитет округ Пухăвĕн депутачĕ Павел Вязов пысăк пулăшу кӳчĕ. Сăмах май, вăл пире, Муркаш волонтерĕсене, иртнĕ кĕркуннеренпех нумай пулăшать. Машинăна эпир «ЗОВ Чувашии» фондпа тачă çыхăнса ĕçленĕрен малти рете çитерме пултартăмăр.

Çакăн пек пулăшу посылкисене пĕтĕмпех чатри çынсем укçа куçарнипе йĕркелетпĕр. Ахмане ялĕнче пурăнакансене уйрăммăн палăртса хăварма кăмăл пур. Кăмăл пур кăна мар, палăртмаллах вĕсене. Ахманесем кашни гуманитари пулăшăвĕпе ĕçлеме тытăннă чух пысăк сумма, 100 пин тенкĕ, куçарса пачĕç. «Ахмане ялĕнче пурăнакансенчен» тесе çыраççĕ. Кун пирки вара пирĕн салтаксем те лайăх пĕлсе тăраççĕ. «Тĕрĕс-тĕкел таврăнсан ахманесем патне çитсе килетпĕр», – теççĕ.



Иртнĕ гуманитари посылки ентешсем патне çитнĕ хыççăн пирĕн пата тав сăмахĕ каланă видео та çитрĕ. Унта ентешсем Муркаш округĕн çыннисене посылка пухса панăшăн пурне те тав тăваççĕ. Павел Вязова тата Ахмане ялĕнче пурăнакансене уйрăм тав сăмахĕ калаççĕ салтаксем. Мăн Сĕнтĕрти Культура çуртĕнче ĕçлекен Валентина Комиссарова ертсе пыракан активлă ушкăна та маскесетьсемшĕн тав тăваççĕ. Сăмах май, пирĕн ентешсем валли маскесетьсене хальхи вăхăтра Мăн Сĕнтĕр, Турай **(1-мĕш сăн ӳкерчĕкре)**, Çатракасси, Ильинка, Чуманкасси территори пайĕсенчи ялсенче çыхаççĕ. Ялти çынсем май пур таран пулăшма тăрăшаççĕ.

Салтаксене пулăшу парасси мĕнле пулса пынипе, салтаксенчен килекен видеосемпе «Моргаушцы – ZA Победу!» Телеграм-чатра паллашма пулать. Салтаксене пулăшу парас ĕçе хутшăнас текенсем лавккасенчи «корзина для бойца» тесе çырнă курупка çинчи картта номерĕ çине укçа куçарса пулăшма май пур.

Хамăрăн ентешсене пулăшма хутшăннă тата халĕ хутшăнакан кашни çынна эпир, волонтерсен ушкăнĕ, тав сăмахĕ калатпăр. Малашне те пĕрле пулар. Пĕрлĕхре вăй пулнине пирĕн Муркаш тăрăхĕнчи салтаксем те туйса тăччăр тесе пĕрле тăрăшар.



**Наталия НИКОЛАЕВА.**

Пирĕн интервью

# Çуллахи кунсем тимлĕх ыйтаççĕ

**Утă уйăхне кĕретпĕр. Кун кĕскелме пуçларĕ пулин те, тĕрлĕ ӳсен-тăран, пахча çимĕç ӳссе аталаннă вăхăт. Халĕ вĕсем кил хуçинчен, пахчаçăран пысăк тимлĕх ыйтаççĕ. Шăрăх кунсенче вĕсене нӳрĕк çитсе пыманни, чир-чĕрпе сăтăрçăсем час-часах сиен кӳни пулас тухăç çине пысăк витĕм кӳрет. Çакна малашлăха пăхакан кашни пахчаçăн пĕлсе, ăнланса ĕçлемелле. Анчах ял çыннисемпе тĕл пулса калаçатăн та нумайăшĕ пахчари, йăран çинчи ансат ĕçсене пĕлменни куç умне тухать. Çакăн пек хăш-пĕр вăртăнлăхсене вăхăтра тата алă айĕнчи мелсемпе татса пама май пуррипе паллаштарма паян хамăр тĕпеле Алексей СЕМЕНОВ пахчаçă-агронома чĕнтĕм. Унăн сĕнĕвĕсем пирĕн хаçата вулакансемшĕн усăллă пуласса шанатăп.**

**– Алексей Семенович, эсир район хаçачĕпе тачă çыхăну тытни пире савăнтарать, сад-пахча ĕçĕнче çĕнĕлĕхсемпе тан пыма пулăшать. Сирĕн сĕнӳ-канашсене пирĕн вулакансем кĕтнине те сисетпĕр. Анчах çынсен ыйту пурпĕрех нумай-ха. Çавăнпа та паян сире хамăр вулакансен черетлĕ ыйтăвĕсемпе паллаштарас терĕмĕр.**

– Тимлĕ итлетĕп. Манăн сĕнӳсем пахчаçăсемпе сад ĕçченĕсене усă кӳресçĕ пулсан, ку мана савăнтарать. Эпĕ хам пултарнă таран пулăшма хирĕç мар. Паян çитес хĕле хатĕрленмелли тапхăр пынăран ку питех те вырăнлă. Мĕнрен пуçлар-ха эппин хамăр калаçăва?

**– Паян килти хушма хуçалăхсенче утă хатĕрлес вăхăт вăй илнĕ. Кунпа пĕрлех ял çыннисем хăйсен пахчисенче çумпа кĕрешеççĕ, йăрансене кăпкалатаççĕ. Анчах хăшĕ-пĕрин пахчара пушă юлнă çĕрсем те пур. Унта паян мĕн те пулин акма-лартма пулать-и?**

– Тĕрĕс ыйту хускатрăр. Кил хуçин, пахчаçăн харпăрлăхри çĕрĕн кашни тăваткал метрĕпе туллин усă курмалла. Хамăн пахчари çакăн пек пĕчĕк лаптăка эпĕ нумаях пулмасть Пекин купăсти лартрăм. Пушă çĕрсем пулсан ытти çынсене те çапла тума сĕнетĕп. Пекин купăсти – усăллă пахча çимĕç. Ăна Китайра пирĕн ĕмĕрĕн 5-мĕш çĕр çуллăхĕнчех селекцилеме тата лартса ӳстерме тытăннă. Европăпа Америкăра унăн уссине хальтерех çеç туйса илнĕ-ха. Шурă пуçлă купăстаран уйăракан тĕп уйрăмлăхĕ – Пекин купăсти тăсăкла пуçлă, çулçисем çирĕп çыпçăнса тăраççĕ. Шурă пуçлă купăстанни пек унăн туни пулманран Пекин купăстине пĕтĕмпех çимĕçре усă курма пулать. Купăстан çак тĕсĕ хăвăрт пулса çитнипе палăрса тăрать. Çавăншăнах пахчаçăсем ăна юратаççĕ те. Тĕрĕссипе вăл 70 кунран пулса çитет. Çавăнпа та ăна лартма эсир паян кая юлман-ха. Анчах кунта пахчаçăн пĕр япалана шута илмелле: Пекин купăсти валли малтан калча тумалла. Çакна валли купăста вăррине çĕртме уйăхĕн 15 – 30-мĕшĕсенче пĕр сантиметр тарăнăша акмалла. Шăтса тухнă калчана усă вырăна – йăран çине – утă уйăхĕн 10-мĕшĕччен куçарса лартмалла. Калчасен хушши 40 сантиметр пулмалла.

**– Акма-лартма кая юлман пахча çимĕç татах пур пулĕ-ха?**

– Пекин купăстипе пĕрлех кая юлса акмалли-лартмалли пахча çимĕç шутне манăн корн салата та кĕртес килет. Майăр тутиллĕ çак ӳсен-тăрана килти хушма хуçалăх пахчинче çуркуннерен пуçласа çурла уйăхĕ (сентябрь) вĕçленичченех акса ӳстерме пулать. Çак салата лартса ӳстерекенсем унпа кирек мĕнле апат-çимĕç хатĕрлеме те тĕллевлĕ усă кураççĕ. Корн салата тепĕр майлă «валерианелла огородная» теççĕ. Ăна час-часах çак ятпа сутаççĕ те. Асăннă салат йăран çинче питĕ тирпейлĕ, илемлĕ ӳсет, пахчана хăт кĕртет. 10 – 40 сантиметр ӳсекен тĕмре салатăн çулçи нумай пулать. Çуллахи çумăр çуман кунсенче вĕсене шăварса тăрассине манмалли çук çеç.

**– «Пахча çимĕç çулçине вĕтĕ симĕс шăна сырса илни тарăхтарсах çитерчĕ. Унран хăтăлма мĕн тумалла-ши?» – ыйтать тепĕр вулакан.**

– Сăмах белокрылка пирки пырать тесе шухăшлатăп. Теприсем ăна алейродида тесе те калаççĕ. «Супершăна» пекех вăл, пĕрре ерсен унран хăтăлма йывăр. Çапах та унпа кĕрешме пулать. Малтан пахча çимĕç ӳсекен йăрана инструкцие пăхăнса «Актарăпа» сапмалла. Пахча çимĕç çулçисене сирпĕтме чĕр чунсен пыйтине пĕтерекен ятарлă шампуне çур кашăк илсе 1 литр шывра лайăх хутăштармалла. Сăтăрçăсем тапăннă çулçăна икĕ енчен лайăх сапмалла.

Хăш-пĕр пахчаçă тепĕр тĕслĕ мелпе те усă курать: 1,4 литр ăшă шыва 7 апат кашăкĕ пан улми уксусĕ тата 3 апат кашăкĕ шĕвĕ супăнь ярса хутăштараççĕ те ӳсен-тăрана та, йăрана та унпа сирпĕтеççĕ-шăвараççĕ. Кунта çакна шута илмелле: ӳсен-тăрана çунтарса ярасран асăрханса малтан сăнамалла 2 – 3 çулçăна пĕрĕхса пăхмалла.

«Бензилбензоат» эмульси те симĕс шăнапа эффективлă кĕрешме май парать. Çакна валли 25 миллилитр эмульсие 1 литр шывра лайăх силлесе хутăштармалла та пульверизаторпа сапса тухмалла.

**– Пахча çимĕç сăтăрçисем пирки сăмах пуçланнă чух хăярăн суя сывлăм чирĕ пирки каласа ăнлантарма май çук-ши? Ăçтан пулать вăл чир тата хăяра унран мĕнле хӳтĕлемелле?**

– Сирĕн пĕр ыйтăвĕ тепринчен кăсăклăрах. Ăнланатăп, çулла вĕсем кашни кил хуçалăхшăн, пахчаçăшăн пĕлтерĕшлĕ пулса тăраççĕ. Йăран çинчи хăярăн суя сывлăм чирне пĕлме йывăр мар. Асăрхаса пăхсан хăяр çулçи çинче малтан çăнăх евĕрлĕ пысăк мар шурă пăнчăсем курăнма тытăнаççĕ. Вăхăт иртерехпе вĕсем пысăкланса пĕрлешеççĕ те çулçă типсе каять. Чирлĕ ӳсентăранăн çимĕçĕ вĕтĕ, сĕтексĕр пулать.

Суя сывлăм чирĕн кăмпи тăпрара хĕл каçать. Ӳсен-тăран çине çумăр çунă чухне тата шлангăран пĕрĕхтерсе сирпĕтсе шăварсен куçни паллă. Чир сулхăн тата нӳрĕ çанталăкра уйрăмах вăйлă аталанать, ытларах сăтăр кӳрет. Сывлăш температури 18 градусран ăшăрах чухне ерекен кăмпа ӳсме чăрăнать. Анчах сулхăн каçсенче вăл каллех хăярăн çулçине сиенлеме пуçлать.

Хăяр çулçисем çинче суя сывлăм чирĕн паллисене асăрхасанах ӳсен-тăрана фунгицидпа сапмалла. Кунта «Топаз», «Чистоцвет» тата «Топсин-М» юрăхлăрах шутланаççĕ. Енчен те темиçе çулçă çеç сиенленме ĕлкĕрнĕ пулсан вĕсене çийĕнчех татса çунтарса яни вырăнлăрах. Çак чир хăяра ересрен пахчаçăн хăш-пĕр йĕркене пăхăнмалла: пахча çимĕçе кашни çул пĕр вырăна лартма юрамасть – 4 çултан пĕр хутчен акмалла, хăяр татса пĕтерсен хăрма пуçланă аврине хăвăрт çумласа илмелле те çунтарса ямалла. Хăяра азот удобренийĕпе ытлашши апатлантармалла мар, сивĕ шыв тауншăн сиенлĕ. Теплицăри хăяра çитĕнтерме унта нӳрĕ сывлăш пухăнасран кăнтăрла алăксене тата форточкăсене уçса уçăлтармалла. Каçхине вĕсене хупмалла, унти сывлăш температури 20 градус ăшăран чакмалла мар.

**– Кашни пахчаçăна пырса тивекен ыйту: йăран çинчи ыхра хăçан çитĕнсе çитнине епле пĕлмелле?**

– Чи малтанах ӳсен-тăранăн аялти çулçисене сăнаса тăмалла. Вĕсем сарăхнă пулсан – ыхра пулса çитнĕ. Ыхрана кăшт маларах кăларни сиенлĕ мар. Вăл типĕтнĕ вăхăтра та çитĕнсе çитет. Кун пек чухне ыхра пуçĕ çирĕп пулни паллă, вăл çуркуннечченех лайăх упранать. Анчах кăшт (3 – 4 кун) кая юлса кăларнă ыхран пуçĕ саланма пуçлать. Вăл вăрах управа юрăхсăр. Çитменнине хăш-пĕр шăлĕ йăран çинех варăнса юлма пултарать. Çавăнпа ыхра кăлармалли вăхăта сыхăрса юлмалла мар.

Вăрăх валли хăварнă ыхрана аялти çулçи сарăхма тытăнсан, чечекĕ çурăлсан пуçтармалла. Çитĕннĕ ыхра пуçĕн хуппи типĕ пулать, тĕсĕ улшăнать. Пахча çимĕçе ывăтмалла мар, ерипен тытмалла. Тăрăнтарсан вăл япăх упранать, çĕрме пултарать. Типĕтнĕ хыççăн тăприне, тымарне, ытлашши аврине асăрханса тасатмалла.

**Анатолий БЕЛОВ калаçнă.**

Спорт

# Москакассисем ылтăн çĕнсе илнĕ

Шупашкарти «Амазония» паркри роллер трасси çинче июнĕн 16-мĕшĕнче биатлонистсен çуллахи ăмăртăвĕ иртнĕ (йĕлтĕр чупăвĕн федерацийĕн çуллахи кубокĕн иккĕмĕш тапхăрĕ). Унта Чăваш Енри, Мари Эл Республикинчи, Ульяновск облаçĕнчи тата ытти регионти спортсменсем хутшăннă.

Пирĕн Москакасси каччӑсем çав ăмăртура икĕ медале тивĕçнĕ. Яшсен вăтам ӳсĕмри ушкăнĕнче Антон Петров, аслă ӳсĕмри ушкăнĕнче Дмитрий Петров – иккĕшĕ те, шăллĕпе пиччĕшĕ, ылтăн çĕнсе илнĕ.

Александр Романов тренер каланă тăрăх, ачасем тренировкăна кунне виçĕ хут тухаççĕ, çулталăк тăршшĕпех çапла. Иртнĕ кунсенче вĕсем шкулта йĕркеленĕ вĕренӳпе тренировка лагерĕнче спортри ăсталăха туптанă.

Палăртмалла, çак каччӑсем вĕренӳ çулĕ тăршшĕпех тĕрлĕ ăмăртăва хутшăнаççĕ, вĕсенчен кашниех çитĕнӳсем тăвать. Яшсем биатлон суйласа илнĕ пулин те, йĕлтĕр чупăвĕн ăмăртăвĕсене те сиктермеççĕ. Москакассинчи секцие çак ачасем тăваттăмĕш класранпах çӳреме тытăннă, халĕ вара 9 тата 10 класран вĕренсе тухрĕç.

Москакассисем Шупашкарти иккĕмĕш номерлĕ спорт шкулĕн воспитанникĕсем шутланаççĕ пулин те, вĕсене, тренер каланă тăрăх, Муркашри ачасемпе çамрăксен «Сывлăх» спорт шкулĕ те яланах пулăшса пырать.

**Наталия НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.**



**Сăн ӳкерчĕкре: Москакасси шкулĕнчи çамрăк спортсменсем хăйсен тренерĕпе Александр Романовпа пĕрле.**

Саламлатпăр

Пирĕн юратнă çыннăмăра – мăшăра, аннене, хунямана, мамака – Отарккӑ ялĕнче пурăнакан **Людмила Геннадиевна НИКОЛАЕВĂНА** илемлĕ юбилей ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр.



Куç тулли телей, çирĕп сывлăх, пысăк çитĕнӳсемпе ăнăçу, вăрăм ĕмĕр сунатпăр сана. Тĕллевсем патне çирĕппĕн утма, ĕмĕтсене пурнăçласа пыма Турри сана вăй-хал патăр, чир-чĕртен упраса тăтăр. Çемьери килĕшӳ, ăнлану, туслăх, тăванусем хисеплени малалла та тĕкĕ парса, савăнăç парнелесе пычăр. Эпир сана юрататпăр.

**Ăшă салампа: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, виçĕ мăнукĕ.**

Пирĕн хаклă та юратнă мăшăра, аннене, асаннене – Тивĕш ялĕнче пурăнакан **Вера Алексеевна ФЕДОТОВĂНА** юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр.



Çирĕппрен те çирĕп сывлăх, ирхи сывлăм пек таса кунçул, инçе çул евĕр вăрăм ĕмĕр сунатпăр. Умри çулу санăн ялан анлă та çутă, такăр пултăр. Мĕн шутланисем пурнăçлансах пычăр, çемьере ялан килĕшӳлĕх, ăнланулăх хуçаланччăр. Эпир сана юрататпăр, хисеплетпĕр.

**Салампа: мăшăрĕ, ывăлĕсем, кинĕ, мăнукĕсем.**

Юратнă аннене, хунямана, кукамая, сывăх тăвана – Муркашра пурăнакан **Татьяна Валерьевна НИКОЛАЕВĂНА** çуралнă кунĕ ячĕпе ăшшăн саламлатпăр.



Мĕнпур ыррине сунатпăр сана: çирĕп сывлăх, иксĕлми телей, вăрăм кун-çул, ĕçре – çитĕнӳсем. Ачусемпе, мăнукусемпе, тăванусемпе савăнса пурăнма ялан тулли кĕреке пултăр, чир-чĕрĕ аякран пăрăнса çӳретĕр, юнашар шанчăклă юлташсем кăна пулччăр. Мĕн шутлани яланах пурнăçа кĕрсе пытăр. Эпир сана юрататпăр, хисеплетпĕр.

**Ăшă салампа: ывăлĕ, хĕрĕпе кĕрӳшĕ, мăнукĕ, çывăх тăванĕсем.**

Хаклăран та хаклă юратнă аннене, асаннене, кукамая – Патаккасси ялĕнче пурăнакан **Людмила Николаевна ЗАХАРОВĂНА** юбилей ячĕпе саламлатпăр.



Çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, канлĕ ватлăх сунатпăр. Сан питӳ яланах савăнăçпа ялкăштăр, çĕр çинче мĕнпур таси, ырри, телей кӳрекенни санпа яланах пĕр çулпа уттăр. Турă вăй-хăват парса тăтăр, кĕрекӳ çăкăр-тăвартан тата юратнă çыннусенчен ан татăлтăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, юратнă мăнукĕсем.**

Пирĕн хисеплĕ, юратнă çыннăмăра – Çĕньял Оринин ялĕнче пурăнакан **Петр Александрович КИСЕЛЕВА** 75 çулхи юбилей ячĕпе ăшшăн саламлатпăр.



Вăл нумай çул Муркашри çыхăну уйрăмĕнче вăй хунă, Чăваш Республикин çыхăнăвăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, ăста пахчаçă. Эпир санпа мухтанатпăр, юрататпăр. Вăрăм кун-çул, иксĕлми вăй-хал, çирĕп сывлăх сунатпăр.

**Ăшă салампа: мăшăрĕ, ачисем çемйисемпе, мăнукĕсем.**

Юратнă та хисеплĕ тăванăмăра – Отарккӑ ялĕнче пурăнакан ĕçчен те ырă кăмăллă çыннăмăра – **Людмила Геннадиевна НИКОЛАЕВĂНА** чун-чĕререн сумлă та илемлĕ юбилей ячĕпе саламлатпăр. Килекен кашни кун сана валли савăнăç, ăшă туйăмсем, çĕнĕ ĕмĕтшухăш илсе килтĕр. Шутланине пурнăçлама Турри вăй-халпа çирĕп сывлăх, вăрăм кун-çулпа тăнăçлăх парнелетĕр. Çемьепе, тăвансемпе пĕрле пуçтарăнма ырă сăлтавĕ тупăнсах тăтăр, кĕрекӳ тулли пултăр. Эпир сана чĕререн хисеплетпĕр, юрататпăр.

**Саламлаканĕсем: Николаевсен, Семеновсен, Владимировсен, Ершовсен çемйисем.**

Сывлăх страници

# Çуллахи рацион мĕнле пулмалла?

Çу кунĕсем хĕру тапхăрта. Апла пулсан рациона улăштарма кирли пирки манмалла мар. Çулла пĕçернĕ яшка тата отбивной кирлех мар. Вĕсем пирки хĕл кунĕсенче ытларах шухăшлатпăр. **Роспотребнадзор специалисчĕсем** палăртнă тăрăх, ку тапхăрта çимĕç калорисĕртереххи, çав вăхăтрах витаминсемпе пуянраххи пулсан лайăх.

Çуллахи рацион урăхларах пулмаллине наукăпа çыхăнман çынсем те ăнланаççĕ. Шăрăх аппетита пĕтерет кăна мар, хĕллехи хăнăхнă блюдăсенчен те пистерет.

Пĕтĕмпех тĕрĕс. Пĕçернĕ яшка вырăнне сĕтел çинче пахча çимĕç бульонĕнче хатĕрленĕ пулмалла. Шаритленĕ катлет тата отбивной вырăнне – çăмăл салатсемпе духовкăра хатĕрленĕ пахча çимĕç. Лимон янă вĕри чей вырăнне усăлтаракан напитоксем пулсан аван. Вĕсене вăрман çырлисенчен хатĕрлеме тăрăшмалла. Калориллĕ тортсене улма-çырлапа ылмаштармалла.

Роспотребнадзор специалисчĕсем апатланăвăн çак принципĕсене тĕпе хума сĕнеççĕ:

– апат-çимĕç калориллĕхне чакармалла. Шăрăхра вăй-хал активлăхĕ пысăк мар, организма энерги сахалрах кирлĕ. Калорисен вучине çуллă çимĕç сахалрах çинипе пĕчĕклетме пулать;

– рациона чĕрĕ пахча çимĕç май пур таран ытларах кĕртмелле. Ӳсен-тăран çимĕçĕсем витаминсен, минералсен, антиоксидантсен дефицитне пĕтерме пулăшаççĕ. Çулла рационра тĕп вырăн пахча çимĕç тата ешĕл çимĕç йышăнма тивĕç. Пахча çимĕçе чĕрĕлле çимелле, майонезпа усă курмалла мар. Ун вырăнне пылак мар йогуртпа, çуллăх мар хăймапа, ӳсен-тăран çăвĕпе, цитрус çимĕçĕсен сĕткенĕпе усă курма май пур;

– мĕн чухлĕ шыв ĕçнине тимлĕхре тытмалла. Организмра шĕвек запасĕ яланах пулмалла. Ăш хыпни тата çăварта типни ан пултăр;

– кулленхи рациона улма-çырла кĕртмелле. Вĕсене çимелли чи лайăх вăхăт – ирпе;

– кулленхи рационра йӳçĕтнĕ сĕт çимĕçĕсем пулмалли пирки ан манăр (греци йогурчĕ, тăпăрчă, кефир, ряженка). Вĕсемпе пĕрле усă курма чи лайăххи – чĕрĕ улма-çырла (çĕр çырли, хура çырла, хура хăмла çырли, хăмла çырли, груша, пан улми).

Çулла рациона кăна мар, çавăн пекех апатлану режимне те улăштарсан тĕрĕсрех. Роспотребнадзор экспречĕсем ирхине 8 сехетре апатланма сĕнеççĕ. Кăнтăрлахи апата 12 сехетре йышăнмалла. Каçхине вара 19 сехетрен кая юлмасăр апатлансан лайăх. Калориллĕ çимĕçе вара ирхине çисен тĕрĕсрех. Каçхи апат валли калори май пур таран сахалрах пултăр.

# Сухан усăллă

Кашни кил хуçалăхрах сухан лартса ӳстернĕрен вăл паян пуриншĕн те алă айĕнчи çимĕç. Сывлăх хуçалçисем палăртнă тăрăх, вăл питĕ усăллă ӳсен-тăран шутланать. Çавăнпах унпа халăх медицининче те активлă усă кураççĕ. Мĕншĕн тесен унăн тытăмĕнче усăллă витаминсемсĕр пуçне органика кислотисем, эфир çăвĕсемпе фитонцидсем, ӳсен-тăран гормонĕ глюкинин пур. Вĕсем юнри сахăр шайне йĕркелеме пулăшаканнисем шутланаççĕ.

**Сухан – тĕрлĕ чиртен эмел вырăнне.**

Ангинăпа чирлесен çийĕнчех 2 вăтам сухана темиçе пая пайласа 200 мл шывра пĕçермелле. Хыççăн хупăлчапа хупласа сивĕнме лартмалла. Çак шывпа карланкăна кунне темиçе хутчен чӳхенин усси пысăк.

**Простатит** чухне те халăх медицининче суханăн усси витĕмлĕ пулнине палăртаççĕ. Çур литр шыва 1 стакан чухлĕ лайăх çунă сухан хуппи ярса йăваш çулăм çинче 5 – 7 минут вĕретмелле. Хыççăн 40 минут тăрăлтарма лартмалла та сăрăхтармалла. Хатĕр шĕвеке 3 кашăк пыл хушса лайăх пăтратмалла. Эмел хатĕр те. Ăна кунне 3 хутчен, апат çиес умĕн, çуршар стакан ĕçмелле. Çак йĕркепе 5 кун сиплеммелле. Унтан пĕр эрне канса илнĕ хыççăн сиплеве татах 5 кун пурнăçлама тăрăшмалла. Ку сиплеве хăвăра лайăх туйма пуçличчен пурнăçламалла.

**А. МАЙРУЛЛИН, халăх сиплевçи.**

# Маляри – çуллахи хăрушă чир

Маляри – çын чирлеме пултаракан паразит чирĕ. Çак чире пуçаракан паразитсем юнри эритроцитсене тата организмăн хӳтлĕх тытăмне сиен кӳреççĕ.

Чир ытларах экваторпа тропики вырăнсенче анлă сарăлнă, анчах та ăна çĕршыва хамăрăн туристсем те, командировкăна тухса çӳрекенсем те, çав тăрăхра вырнаçнă çĕршывсенчен килекенсем те илсе килеççĕ. Çавăнпа та маляри ытларах пирĕн патра çулла тĕл пулать. Тĕнчере çулталăкра вăтамран 250 млн çын çак чирпе чирленине палăртаççĕ, çур миллиона яхăнĕ пурнăçран уйрăлать. Чирлекенсен йышĕнче 5 çул тултарман ачасем нумайрах.

Тропик малярийĕ çынна икĕ талăк иртичченех вĕлерме пултарать. Çавăнпа та чирлес хăрушлăх пур чухне маляри чирне асăрхаттармалли йĕркене пăхăнмалла.

Тропикри вырăнсене канма кайиччен пĕр эрне маларах малярие хирĕç кĕрешекен препарат йышăнма тытăнмалла, вăл организма хӳтĕлет. Çак препаратпа каннă вырăнта та тăтăш усă курмалла. Тавраннă хыççăн та ăна пĕр уйăха яхăн йышăнмалла. Мĕнле препарат йышăнасси хăш çĕршыва каяссинчен килет, унăн дозине врач палăртать.

Çавăн пекех кĕлеткен тумтирпе картланман вырăнĕсене репеллентпа сĕрмелле, пурăнакан пӳлĕмре чӳрече тата алăк çинче сетка пулмалла, пӳлĕме те хурт-кăпшанка пĕтерекен аэрозольпе вăхăтран вăхăта сирпĕтмеллине асра тытмалла.

Малярие пуçараканĕсем паразитсем пулнăран, чир паллисем шăнтса пăрахнипе, гемоглобин шайĕ чакнипе тата юнра эритроцит шайĕ пĕчĕкленнĕрен организмра кислород çитменнипе палăраççĕ.

Маляри тăватă тĕрлĕ пулать: тропик малярийĕ, виçĕ кунлă маляри, тăватă кунлă маляри тата овале-маляри. Вĕсенчен чи йывăрри – тропик малярийĕ.

Маляри чирĕ чирлĕ çынран сыввине вăрăм туна (ами) юн ĕçнĕ чух ертме пултарать. Кунсăр пуçне чир пĕр çынран теприне юн янă чухне те лекме пултарать, ача кĕтекен амăшĕнчен те, вăл чирлĕ пулсан, çуралмалли ачана чир лекет. Вăрăм тунаран организма лекнĕ паразитсем юнра куçса çӳреççĕ, кайран пĕвере çитеççĕ, унта аталанаççĕ.

Паразитсем аталаннă вăхăт çичĕ кунран тытăнса виçĕ çул таран тăсăлма пултарать. Çакă маляри тĕсĕнчен килет, тропик маляри чирĕн ку тапхăр кĕске. Чир çын пĕтĕмĕшле наркăмăшланнинчен пуçланать (ывăнни, пуç хытă ыратни, вăхăтран вăхăта шăнтса пăрахни урлă палăрать). Кĕлетке температури 40 е ытларах градус таран хăпарать, темиçе сехет таран çапла тăрать, питĕ хытă шăнтса пăрахать, хыççăн вара çын питĕ вăйлă тарлать. Çакăн пекки кунне пĕрре е темиçе хутчен, е тата темиçе кунта пĕрре пулса иртни малярипе чирленине кăтартма пултарать. Тропик малярийĕпе чирленĕ чухне теприсен хăшпĕр палли пачах та пулмасть, анчах та чире сиплессине кая хăвармалла мар, апла пулсан тӳрех больницăна каймалла. Çак чире вăхăтра сиплеме тытăнманран ĕнтĕ чирленисенчен вăтамран 10 – 40 процентĕ таран вилет. Ачасен, пулас амăшĕсен тата хавшак иммунитетлă çынсен (ытларах аслă ăру çыннисен) уйрăмах асăрханмалла.

Кирек епле чиртен те хăвăра яланах упрама тăрăшăр. Чир паллисене сиссенех врач патне кайăр.

**Галина СОКОЛОВА,**
**Муркаш район тĕп больницин эпидемиолог врачĕ.**

# Çăмарта хăçан çимелле?

Вуншар çул каялла пире çăмарта регулярлă çини сывлăхшăн хăрушă пулма пултарни пирки ĕнентерме хăтланатчĕç. Паян вара специалистсем тĕпчесе пĕлнĕ ĕнтĕ, çăмарта – сывлăха сыхласа хăварма пулăшакан чи лайăх çимĕç. Уйрăмах аслă ӳсĕмри çынсемшĕн.

**Практика çирĕплетет**

**Япони тухтăрĕ Такэси Курихара** çавна палăртать. Ӳсĕм çулĕсенчи çынна çителĕклĕ таран белок кирлĕ. Ку енĕпе чи лайăх пулăшуçă – çăмарта. Хăйĕн пациенчĕсене вăл кунсерен 3 – 5 çăмарта çиме сĕнет. Ку сĕнĕве тĕрĕс теме пулать-и-ха?

Çак специалист патне 80 çул урлă каçнă çын пынă. Вăл аран-аран утнă. Специалист сĕннĕ диета ăна пулăшнă. Специалист ăна белок ытларах çимелли пирки каланă, рациона аш-пăш тата çăмарта нумайрах кĕртме сĕннĕ.

Тепĕр тăватă уйăхран пациент ирĕклĕнех утса çӳреме пултарнă. Унăн çӳçĕ тата учĕ те лайăхланнă. Çак арçын тухтăр сĕннипе талăксерен 5 çăмарта çинĕ. Вăрттăнлăхĕ мĕнре-ха?

Çулсем иртнĕ май çынсен альбумин шайĕ чакать. Юн пахалăхĕ валли вара вăл çав тери кирлĕ. Асăннă белок пулмасан тутăхлă япаласене организм лайăх йышăнаймасть тата вĕсем органсемпе системăсем патне йĕркеллĕ пырса тăраймаççĕ. Мышцăсем хавшакланаççĕ. Рациона çăмарта ытларах кĕртнĕ май, пациент альбумин кăтартăвне самай ӳстерме пултарнă.

Кунпа пĕрлех çăмарта – çăмăллăн йышăнакан белок, кальци, витаминсен, минералсен çăл куçĕ.

Холестерин пирки вара мĕнле-ха? Вăрттăнлăхĕ акă мĕнре. Çăмартара унăн шайне хăпартма мар, чакарма пултаракан япаласем пур. Кусем вĕсем цистеин, лецитин, çавăн пекех пĕвере йĕркеллĕ ĕçлеме пулăшакан метионин. Çăмартара коллаген нумай. Паян çынсем ăна апат хушăмĕсенче шырама хăнăхнă.

Апла пулсан мĕншĕн холестерин ӳссе каясран шикленнĕ-ха? Акă мĕн пирки. Тестсене курăк çиекен выльăхсем çинче ирттернĕ, вĕсене çăмарта панă. Тĕрĕссипе вĕсен организмĕ выльăх белокне йĕркеллĕ йышăнма пултарайман. Çавăнпа та кăтартусем йăнăш пулнă.



Çапах та пĕвер, ват хăмпи тĕлĕшпе проблема пуррисен çăмарта çиессипе асăрханулăрах пулма тивет. Çавăн пекех панкреатит, гастрит чирĕсемпе тата аллерги реакцийĕпе аптăракансен те.

**Çăмарта хăçан çисен лайăхрах-ха?**

Чи лайăххи – ирлесе çини. Вăл вара кунĕпех лайăх кăмăл-туйăмлă пулма май парĕ, миме ĕçне пулăшĕ, стрессене çĕнтерме вăй хушĕ.

Çăмарта каçхине çини те япăх мар. Мĕншĕн тесен унра триптофан нумай. Вăл вара ыйхă килменнине çĕнтерме пулăшать.

# Руккола мĕнпе усăллă?



Руккола – ешĕл çимĕç. Ăна салатсене, закускăна е вĕри апат-çимĕçе те хушаççĕ. Хăйне евĕр тутăллă тата пуян составлă пулнă пирки вăл япалахи рецептсене тĕрлĕ тĕслĕ тума пулăшать, рациона усăллă япаласемпе пуянлатать.

Руккола брокколипе тата горчицăна çывăх. Ытларах ешĕл çимĕç хăйĕн тутипе пĕр-пĕринчен ытлашши уйрăлса тăмасть пулсан, рукколăна ытисемпе пăтраштараймăн. Вăл чĕпĕтет тата блюдăна йӳçек тăвать. Йӳçеклĕхе чакарас тетĕр пулсан, çамрăк папаксемпе усă курас пулать: вĕсем çемçерех тутăллă пулаççĕ. Çавăн пекех ăна вĕрире ăшăхлама е хатĕрленĕ чухне вĕри блюдăна хушма та пулать.

100 грамм рукколăра 25 килокалори, 2,58 грамм белок, 1,6 грамм клетчатка, 160 миллиграмм кальци, 1,46 миллиграмм тимĕр, 15 миллиграмм С витамин, 369 миллиграмм кали шутланать. Çавăн пекех унра фоли кислоти, магни, А провитамин пур. Унрах клетчатка, фотохими япалисем нумай, сахăр, калори тата çусем сахал.

**Руккола усси**

Руккола антиоксидант енĕсемпе палăрса тăрать. Диабетиксемшĕн усăллă, чĕрепе юн тымарĕсен системин ĕçне пулăшать.

К витамин шăмăсен метаболизмне хутшăнать. Вăл çитмен чухне шăмă хуçăласси те пулма пултарать. Рукколăн пĕр чашăкĕнче вара К витамин 21,8 миллиграмм. Çакă асăннă элементăн талăкри норми чухлĕ. К витамин шăмăсен минерализацине те хутшăнать: кальцие йышăнма пулăшать тата ытлашши кальцие организмран кăларать. Кунпа пĕрлех кальци шăмă тĕртĕмĕн ӳсĕмне тивĕçтерет тата ăна писĕрех тăвать. Руккола чашăкĕнче ку япала 32 миллиграмм.

Тĕпчевсем кăтартса панă тăрăх, пахча çимĕç çини 2-мĕш йышши диабет пулма пултарассине чакарать. Уйрăмах ешĕл çимĕç ку тĕлĕшпе усăллă.

Руккола экстракчĕ скелет мышцисен клеткисем çине диабета хирĕçле витĕм кӳрет. Кунсăр пуçне руккола тата хĕреслĕ чечеклисен йышне кĕрекен ытти пахча çимĕç клетчаткăн лайăх çăл куçĕ пулса тăраççĕ. Клетчатка юнри глюкоза шайне висĕллĕ тăвать. Клетчаткăпа пуян çимĕçсем тутăлăх туйăмне нумайлăха сыхласа хăвараççĕ, апла пулсан ытлашши çиесрен асăрхаттараççĕ.

Тĕпчевсем ирттерсе çавна та палăртма май килнĕ. Хĕреслĕ чечеклисен йышне кĕрекен пахча çимĕçпе, салатсемпе тата ешĕл çулçăллă çимĕçсемпе пуянлатнă диета чĕрепе юн тымарĕсен чирĕсене асăрхаттарма пулăшать. Кунсăр пуçне кун пек диета ватă хĕрарăмсен атеросклероз чирĕ аталанма пултарассине асăрхаттарассипе те пĕлтерĕшлĕ пулса тăрать. Атеросклероз – анлă сарăлнă чир. Кун пек чухне артерисенче муклашкасем пухăнса тулаççĕ, вĕсем чĕрепе юн тымарĕсен чирне пуçарма пултараççĕ.

Руккола антиоксидантсемпе пуян. Ку пĕрлешӳсем клеткăсене сиенленесрен сыхлаççĕ, ватăлассин процесне вăраххатаççĕ.

Рукколăра глюкозинолатсем те пур. Кусем вĕсем çут çанталăк япалисем, ăна йӳçек тутăллă тата вăйлă шăршăллă тăваççĕ. Вĕсем хăш-пĕр онкологи чирĕсене хирĕç тăрассипе те пĕлтерĕшлĕ.

**Руккола сиенĕ**

Енчен те çын юн шĕветмелли варфарин (кумадин) йышши препаратсем йышăнать пулсан, К витамин пур çимĕçсем тĕлĕшпе тимлĕрех пулма тивет. Вĕсене рациона кĕртиччен врачпа калаçса пăхни ытлашши пулмĕ.

Апат ирĕлтерекен система тĕлĕшпе проблема пуррисен те кун йышши салатпа иртĕхме кирлĕ мар. Рукколăра клетчатка нумай. Çавна пула хырăм карăнни, метеоризм, пыр хĕртни пулма пултараççĕ.

Ку çимĕç вăйлă аллерген шутланмасть. Апла пулин те кулăста, çарăк тата йӳç кăшман тĕлĕшпе аллерги пулсан, руккола çиме кирлĕ мар.

**Валентина КУТОРКИНА,**
**гигиенăпа эпидемиологин Чăваш Республикинчи центрĕн фельдшер-лаборанчĕ.**

Сěнӳ-канаш

# Шыв ěçме те пěлес пулать

Çуллахи шăрăх кунсем çитсе килнě май, **Ирина Мансурова диетолог-нутрициолог** шыв ěçессин режимě енěпе пěлтерěшлě çичě сěнӳ панă. Кунпа пěрлех вăл çуллахи вăхăтра шыв ěçессин режимне пěлсе йěркелени питех те пěлтерěшлě пулни пирки каланă. Кунпа пěрлех шыв пирки нумайăшě пěлмен фактсем те пур иккен.

**Пěрремěшěнчен,** шывра 0 калори пулнине пăхмасăрах, унăн составě питě усăллă пулни паллă. Çын шыв урлă нумай микроэлемент йышăнать. Вěсен шутěнче: йод, фтор, хлор, селен, кальци тата ытти те. Эксперт ăш хыпнине вěретмен фильтрланă шыв ěçсе иртерме сěнет. Ăнланас пулать, дисцилляциленě (пăслантарса тасатнă) шыв вěçěм ěçни хăрушлăхпа çыхăннă. Çын çапла майпа усăллă нумай япалана йышăнмасăр юлать. Кайран вара çакă сывлăх çинче палăрма пултарать. Вěретнě шыв кăна ěçни те тěрěс мар. Ку вăл – усăсăр «вилě» шыв кăна.

**Иккěмěшěнчен,** çын валли талăкри йěркеллě доза – 2 литр таса шыв. Пӳре тата чěре чирěсемпе аптăракансене ку пырса тивмест. Шыва апат йышăниччен çур сехет маларах ěçсен тěрěсрех пулать. Çитменнине тата – ирсерен пěрик стакан. Аллерги çук пулсан, ирхи стакана пěр кашăк пыл хушма ирěклě. Ерипен ирхине ěçекен шыв виçине икě стакана та çитерме юрать. Çавăн пекех ирпе ěçекен шыва лимон сěткенě те хушма пулать. Хыççăн пӳлěм температури чухлě ăшăннă шыв ěçетěр пулсан, пыршăлăх перистальтики лайăхланать, юн çаврăнăшě хăвăртланать, япаласен ылмашăвě пуçланать.

Çавăн пекех каçхине çывăрас умěн пěр стакан шыв ěçни те усăллă.

**Виççěмěшěнчен,** çакна асра тытас пулать. Апат йышăннă чухне шыв ěçме сěнмеççě. Çакă йывăр туяссипе, хырăм карăннипе çыхăнма пултарать.

**Тăваттăмěшěнчен,** пӳре енěпе проблема пуррисем, онкопатологипе тата организмра шыв пухăннипе аптăракансем вара шыв ěçессин уйрăм режимне пăхăнма тивěç. Ку вăл шыв ěçмелле маррине пěлтермест, дозировка тěлěшпе питě тимлě пулма тивет.

**Пиллěкмěшěнчен,** çулла спорт занятийěсем ирттернě чухне баланс пирки манма кирлě мар: тренировкăччен пěр стакан шыв ěçěр. Заняти вăхăтěнче вара кашни 15 минутран 75 – 100 миллилитр шыв ěçсен лайăх.

**Улттăмěшěнчен,** яланах асра тытас пулать – шыв çителěксěрри ӳте, чěрене тата тымарсене сиенлет.

**Çиччěмěшěнчен,** шыв ытлашши ěçни те лайăх япала мар. Çакă хăрушлăхпа çыхăнма пултарать. Кунпа пěрлех пуç ыратни, тăн пăтрашăнни, хăсас килни е хăсни те тěл пулать.

# Пляжра харпăр хăйне мěнле тытмалла?

Çу кунěсем çитнě май пирěнтен ытларахăшě пляжра канма тата хěртěнме, юхан шывра çăвăнса уçăлма тăрăшать. Анчах та кану усăллă та хăрушлăхсăр пултăр тесен, уйрăм правилăсене пăхăнас пулать:

– официаллă пляж суйласа илěр – вěсене санитарипе эпидемиологи экспертизи ирттереççě, ятарлă ирěк параççě, шыв тата хăйăр пахалăхěн лабератори тěпчевне ирттереççě, шыв тěпне тасатаççě. Информаци щичě çине «Шыва кěме юрамасть!» тесе çырса хунине шута илěр;

– юхан шыври шыва ан ěçěр. Ěçмелли шыв хăвăрпа пěрле илěр – унпа ăш хыпнине ирттерме те пулать, алă та çума юрать;

– хăвăрпа пěрле çимелли илетěр пулсан, хăвăрт пăсăлманнисене суйласа илме тăрăшăр. Улма-çырла, пахча çимěç пулсан лайăхрах. Усă курас умěн вěсене те, алăна та çумалли пирки ан манăр;

– хăйăр çинче выртса хěртěнме сěнмеççě, унта паразит хуртсем пулма пултараççě. Мěншěн тесен пляжра час-часах йытăсене уçăлтарса çӳреççě. Хěртěнме хăйăр çине çивитти е алшăлли сарса хурас пулать;

– хěвел активлăхě кăнтăрла тěлне ӳссе каять. Çавăнпа та ирпе е каçалапа хěртěнме тăрăшмалла (11 сехетчен тата 16 сехет хыççăн). Пиçсе каяс мар тесен, хěвелтен хӳтěленмелли кремпа усă курăр;

– çара пуçăн ан пулăр, ирěклě çипуç тăхăнăр, пушмак та усă пултăр. Шыва кěрсе тухнă хыççăн нӳрě çипуçе типпипе улăштарсан лайăхрах. Хěвелтен хӳтěленмелли куçлăх пирки те ан манăр;

– пляжра алкоголь ěçме кирлě мар, ӳсěрле нихăçан та шыва ан кěрěр;

– хăвăр хыççăн çӳп-çап ан хăварăр, уйрăмах апат-çимěç юлашкисене. Вěсем хурт-кăпшанкăна, кăшлакан чěр чунсене тата ыттисене илěртеççě. Вěсемех инфекци чирěсем сарма пултараççě. Çӳп-çап валли урнăсемпе тата контейнерсемпе усă курăр.

Сирěн кану кăмăллă та усăллă, çавăн пекех хăрушлăхсăр пултăр!

**Екатерина ЕГОРОВА,**
**гигиенăпа эпидемиологин Чăваш Республикинчи центрěн пěтěмěшле гигиена врачě.**

# Кефиртан килти сыр – пěр каçра

Никамшăн та вăрттăнлăх мар, килти сыр магазинринчен тутлăрах та, усăллăрах та. Апла пулин те чылайăшě ăна килти условире хатěрлеме тăрăшмасть. Çакă чылай вăхăт ирттерессипе çыхăннă кăткăс ěç тесе шухăшлать. Тěрěссипе вара пачах урăхла. Сěнекен асăннă рецептпа ăна хăвăрт хатěрлеме пулать, кăткăслăхě те çук. Ăна çěр кăçмалăх пиçсе çитме хăвармалла пулать. Питě тутлă пулě. Кăмăлăра кура сыра çăмартасăр та хатěрлеме пулать. Кун пек вăл татах çемçерех пулě, тăпăрчăна аса илтерě.

4 порци сыр хатěрлеме çак çимěçсем кирлě пулаççě:

2,5 процент çуллă кефир – 1 литр (1000 гр);

2,5 процент çуллă сěт – 1 литр (1000 гр);

çăмарта – 3 шт (180 гр);

тăвар – 3 чей кашăкě (30 гр).

Çăмартасене тěплěн çăвăр та хут алшăллипе типěтěр. Çавăн пекех хулăн тěплě пысăк кастрюль, венчик, марля тата дуршлаг хатěрлěр.

**1-мěш утăм**

Хатěрлеме тытăнатпăр. Тарăн савăта çăмарта ватса ярăр. Унта кăштах кефир тата тăвар хушăр. Хыççăн венчикпа тěплěн хутăштарăр. Пысăк кастрюле кефир тата сěт ярăр та çулăм çине лартăр. Кастрюле çăмарта хутăшě хушăр та лайăх пăтратăр. Массăна пăтратса тăрса вěреме кěртěр, хыççăн татах 10 минут вěретěр. Масса пěтěмěшпех тăпăрчăланса лартăр.

**2-мěш утăм**

Сыр хатěрлетпěр. Уйрăм кастрюль çине дуршлаг вырнаçтарăр, çиеле темиçе хут туса марля хурăр. Сыр хатěрлемелли хутăша дуршлага ярăр, 5 минутлăха хăварăр. Кайран марля хěррисене варрине пуçтарса илсе çиеле мěн те пулин лартăр. Калăпăр, шыв тултарнă банка. Масса сивěнессе кěтсе илěр те хыççăн ăна 12 сехетлěхе холодильника лартăр.

Килти питě тутлă сыр хатěр те. Ăна пысăк мар касăксем туса сěтел çине çăкăр татăкěпе парăр.



# Тимěр банкăри консерва мěнпе хăрушă?

Тимěр тарăри консерва – ку вăл меллě те ансат. Анчах та пур чухне хăрушлăхсăр мар.

Çăратнă сěт, кăмпа, пахча çимěç, аш, пулă – тимěр тарăна пěтěмпе тенě пекех упаковкăлаççě. Кунта тěлěнмелли те нимěн те çук. Çапла майпа çимěçе самай ытларах вăхăт усрама май пур. Кун пек банкăпа усă курма та меллě.

Банка лăпчăнни тара çинче пěчěк çурăксем пулма пултарни пирки калать. Кун пек чухне консервăна сывлăш лекме пултарать, унта микроорганизмсем ěрчеме пуçлаççě. Тара мăкăрăлса тухни те çимěç пăсăлнине систерме тивěç.

Енчен те эсир консерва тӳрех çиме мар, усрас тěллевпе туянатăр пулсан, усă курмалли срокě вěçленсе пырракиннине ан суйлăр. Усрав срокě тухнă çимěç пăсăлма пултарать, наркăмăшлă япаласем те пулма пултараççě.

Банка çинче тутăх паллисем пулмалла мар. Ытларах чухне коррози хатěр продукцие тěрěс мар усранипе çыхăннă.

